ПЕТЕМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Сентябрь 8 ытларикун
№ 176 (9085)
36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн 1953 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен информациллĕ пĕлтерӳ (1 стр.).

Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ тата 1952 çулхи бюджета мĕнле пурнăçлани çинчен. Чăваш АССР Финанс министрĕ А. В. Сомов юлташ тунă доклад (2—3 стр.).

В. Михайлов.— Йĕтĕне вăхăтра пухса кĕртер (1 стр.).

Мире хӳтĕлес тĕллĕшпе ĕçлекен Чăваш республикинчи Комитетăн пленумĕ (3 стр.).

Венгрире апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакне йӳнетнĕ (4 стр.).

В. И. Ленин Сочиненийĕсен 4-мĕш томне венгер чĕлхипе пичетлесе кăларнă (4 стр.).

Корейăра тыткăнри çар çыннисене репатрнаци тăвас тĕллĕшпе ĕçлекен комитетăн ларăвĕ (4 стр.).

Италипе Югослави хушшинчи çыхăнусем (4 стр.).

«Юманите» хаçатăн уявĕ (4 стр.).

Хĕвеланăç Германири суйлав (4 стр.).

Чăваш АССР бюджечĕ

Ĕнер Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Сесси республикăри ĕçсынинсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, пилĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн ăнăçлă кĕрешнĕ, ĕçри хастарлăх тата политикăлла çĕкленӳ ниçтанхинчен ытларах вăйланнă вăхăтра иртет.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Чăваш АССР халăх хуçалăхĕ хăватлăн малалла аталанса пырать. Республикăра çĕнĕрен пысăк предприятисем лартаççĕ, киввисене юсаççĕ тата пысăклатаççĕ. Иртнĕ çулта республика промышленноçĕ, вăрçăчченхипе танлаштарсан, икĕ хут нумайрах, кăçалхи пĕрремĕш çурçуллăхра, пĕлтĕрхи çак вăхăтрипе танлаштарсан, 13 процент ытларах продукци туса кăларчĕ. Юлашки çулсенче капитальнăй строительство анлă сарăлчĕ. Социализмла ялхуçалăхĕ вăйланса пырать. Тулă, çĕрулми, техникăлла культурăсем акса тăвакан çĕр лаптăкĕ пысăкланчĕ. Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх йышĕ ӳсет. Чăваш халăхĕн формипе нацилле, содержанипе социализмла культури чечекленет. Республикăри ĕçсынинсен материальнăй пурнăçĕ лайăхланать.

Хуçалăхпа культура строительстви вăйланса пыни республика бюджечĕ ӳсниччен те аван курăнать. Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи бюджетĕнче тупăшсем 333.108 пин тенкĕ, расходсем 332.948 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1953 çулхи бюджетра вĕсен хисепĕ пĕтĕмпе 348.735,2 пин тенкĕ пулмалла. Кăçалхи бюджет пĕлтĕрхинчен 15.787,2 пин тенкĕлĕх пысăкрах. Бюджетри пĕтĕм укçа-тенкĕрен халăх хуçалăхне аталантарма 37.360 пин тенкĕ, социально-культурăллă ĕçсем валли 280.202 пин тенкĕ каять. Çакă вăл Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ĕçсынинсен пурнăçне лайăхлатма тата культурине ӳстерме тăрăшнине уççăн кăтартса парать.

Бюджета республика халăх хуçалăхĕн 1953 çулхи планне асра тытса туса хатĕрленĕ. Çав планра пирĕн республика умне халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене малалла аталантарас, тавар çаврăнăшне пысăклатас, ĕçсынинсен материальнăй пурнăçне лайăхлатас, культурăна ӳстерес тĕллĕшпе пысăк задачăсем лартнă.

Умра тăракан задачăсене ăнăçлă пурнăçласси бюджета укçа-тенкĕ вăхăтра пухăннинчен килет. Апла пулсан, промышленность предприятийĕсемпе хуçалăх организацийĕсен усламран памалли укçана тата оборотран тӳлемелли налога яланах срокра парса татма тăрăшмалла. Колхозсен те тупăшран памалли налога вăхăтра тӳлесе татмалла. Çакăнпа пĕрлех ĕçсынинсен те тивĕçлĕ налогсене тата ытти тӳлевсене вăхăтра парса татас пулать.

Бюджета пурнăçлас тесен, промышленность предприятийĕсен ĕçне лайăх йĕркелемелле. Производствăн пур отраслĕсенче те плансене тултарса пыни, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетни, ĕç тухăçлăхне ӳстерни совет халăхĕн материальнăй пурнăçне лайăхлатас ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ мĕн чухлĕ пысăкрах, продукцин хăйне ларакан хакĕ мĕн чухлĕ йӳнĕрех пулать, халăхăн пурнăçĕ çавăн чухлĕ лайăхланать.

Республика бюджетне государствăн суту-илӳ организацийĕсемпе кооперацирен укçа-тенкĕ нумай пухăнмалла. Ку организацисенчен хăшпĕрисем япăх ĕçлеççĕ, укçа-тенке тирпейлĕ тыткаланаççĕ. Чăвашторг уйрăмĕсем иртнĕ çулта суту-илӳ тума укçа-тенкĕ нумай расходланă, планпа палăртнинчен пĕр миллион тенкĕ ытларах пĕтернĕ. Вĕсен ĕçĕнче кăçал та çитменлĕхсем нумай. Çавăн пирки вĕсен бюджет умĕнчи парăмĕ пысăк. Çакăнтан суту-илӳ организацийĕсен хăйсен ĕçне лайăхлатма кирли уççăнах курăнса тăрать. Вĕсен халăх ыйтакан таварсене çителĕклĕ кӳрсе килмелле, вырăнти промышленность туса кăларакан япаласене ытларах илсе сутмалла.

Республикăра ялхуçалăхĕнче тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх йышĕ ӳссе пынă вăхăтрах, кая юлнă колхозсем те пур-ха. Çавăн пек колхозсем обществăлла хуçалăх начар аталаннă пирки тупăш сахал илеççĕ, тупăшран памалли налога вăхăтра тӳлемеççĕ. Çакă та бюджета тупăшсен енĕпе вăхăтра пурнăçлама чăрмантарать. Ку чăрмана пĕтерме колхозсен обществăлла хуçалăхне вăйлатмалла. Тĕштырă туса илессине малашне хăвăртрах ӳстерсе пымалла. Çĕрулмипе пахча çимĕç тăвас ĕçе анлă сармалла. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе хăвăрт вăйлатса пымалла.

Анчах пирĕн республикăра финанс планне тултарас ĕçре çитменлĕхсем нумай. Финанс органĕсем предприятисен тата хуçалăхăн ытти отраслĕсен экономикине тĕпчесе вĕренес тĕллĕшпе сахал ĕçлеççĕ, вĕсен ĕçĕсене сайра-хутра çеç тĕрĕслеççĕ, бухгалтери отчечĕсемпе балансĕсене ячĕшĕн çеç пăхса тухаççĕ. Хуçалăх органĕсем хăйсене пăхăнса тăракан предприятисен ĕçĕсене хăшпĕр чухне кăна тĕрĕслеççĕ. Тĕрĕслев ĕçне кирлĕ пек йĕркелеменнине пула уйрăм предприятисенче, организацисенче тата учреждениссенче финанс дисциплинине пăснисем те пулаççĕ. Республикăри Вырăнти промышленность министерствин нумай предприятийĕсем бюджет умĕнчи обязательствăсене çителĕксĕр пурнăçласа пыраççĕ. Строительство организацийĕсен ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Вĕсем строительство хакне йӳнетмелли задансене пурнăçламаççĕ. Чылай хуласемпе районсенче ĕçсынинсен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен мастерскойсем япăх ĕçлеççĕ. Хуçалăх планĕсене тултарнине, перекетлĕх режимне тытса пынине, вырăнти резервсемпе усă курнине финанс органĕсем тĕрĕслесе тăрассине вăйлатмалла.

Кăçалхи бюджетра социализмла хуçалăхран илекен тупăшсем чылай ӳсеççĕ, çав вăхăтрах халăхран пухăнакан укçа-тенкĕн хисепĕ чакать. Анчах та халăхран налогсемпе тĕрлĕ тӳлевсем пухас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырас çук. Çакна вырăнти Советсемпе финанс работникĕсем яланах асра тытма тивĕçлĕ. Вĕсен халăхран укçа-тенкĕ парăмĕсене пухас тĕллĕшпе тимлĕ ĕçлемелле. Улатăр, Ишлей тата ытти хăшпĕр районсенче çак ĕç ăнăçлă пырать пулсан, нумай районсенче финанс планне тултарас ĕç чăтма çук начар тăрать. Виççĕмĕш кварталти плана сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Хĕрлĕ Чутай районĕ 23,6 процент, Октябрьски районĕ—31,7 процент, Чурачăк районĕ—33 процент çеç тултарнă. Çакăншăн чи малтан финанс пайĕсемпе райсовет исполкомĕсем айăплă. Çав вăхăтрах ку районсем кая юлнăшăн Чăваш АССР Финанс министерстви те ответлă. Сăмахран, Хĕрлĕ Чутай районĕ финанс планне тултарас енĕпе тахçантанпах кая юлса пырать. Çапах та министерство çав районти финанс органĕсен ĕçне лайăхлатма татăклă мерăсем йышăнмасть. Республика виççĕмĕш кварталти финанс планне сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 49,8 процент кăна тултарнă. Çакă вара министерствăн финанс ĕçне конкретлăрах тата оперативлăрах ертсе пымалли çинчен калать. Партипе совет органĕсен финанс ĕçĕ çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Бюджета пур енĕпе те ăнăçлă пурнăçлас тесен, республикăри государство аппарачĕн, çав шутра уйрăмах финанс органĕсен, предприятисен, хуçалăх организацийĕсен ĕçне лайăхлатмалла. Кунпа пĕр вăхăтрах халăх хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатмалла.

Республикăн 1953 çулхи бюджетне ăнăçлă пурнăçлани Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви халăх хуçалăхне аталантарас, культурăна ӳстерес, совет халăхĕн пурнăçне малалла лайăхлатас тĕллĕшпе палăртнă задачăсене вăхăтра пурнăçлама, коммунизм строительствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тума май парать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн ларăвĕ

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн 1953 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен 4 сехетре, Шупашкарта Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕ уçăлнă.

Сессие Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ С. М. Ислюков депутат уçнă.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ С. М. Ислюков депутат сессире пăхса тухма çак ыйтусене тăратни çинчен пĕлтерет:

1. Чăваш Советлă Автономиллĕ Социализмлă Республикин 1953 çулхи бюджетне тата Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă отчета çирĕплетесси.

Ку ыйтăва Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ тăратнă.

2. Чăваш АССР-ĕнче халăха вĕрентес ĕç мĕнле тăни тата ку ĕçе лайăхлатмалли майсем çинчен.

Ку ыйтăва Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ тăратнă.

3. Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ йышăннă указсене çирĕплетесси.

Ку ыйтăва Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ тăратнă.

А. В. Плотнов депутат сĕннипе Верховнăй Совет пурте пĕр саслă пулнипе çак ыйтусене кун йĕркине кĕртме йышăннă.

Унтан Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ С. М. Ислюков юлташ Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ çинчен тата Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен доклад тума Чăваш АССР Финанс министрне, РСФСР Верховнăй Совечĕн депутатне А. В. Сомов юлташа сăмах парать.

А. В. Сомов юлташ доклад тунă хыççăн сесси Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Бюджет комиссийĕн председателĕ Я. Г. Манлашкин депутат тунă содоклада итленĕ.

Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ çинчен тата Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи бюджетне пурнăçлани çинчен тунă доклад тăрăх прениере çаксем тухса калаçнă: И. В. Новиков депутат (Канаш хули, Ленински округ), М. П. Павлов депутат (Тăвай районĕ, Тăвай округĕ), Г. А. Херсонов депутат (Октябрьски районĕ, Нарат Чакки округĕ), И. Г. Григорьев депутат (Етĕрне районĕ, Ирçе округĕ), А. И. Иванова депутат (Советски районĕ, Советски округ), Н. И. Захаров депутат (Етĕрне районĕ, Палтай округĕ), М. С. Михайлова депутат (Йĕпреç районĕ, Йĕпреç округĕ), А. Н. Семенов юлташ (Шупашкар район Совечĕн исполкомĕн председателĕ) П. И. Казаков депутат (Улатăр хули, Московски округ), СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ В. Г. Ефимова (Чăваш АССР Сывлăх министрĕ), Н. Ф. Смыков депутат (Пăрачкав районĕ, Пăрачкав округĕ).

Çакăнпа Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш ларăвĕ хупăннă. Çитес лару сентябрĕн 8-мĕшĕнче, ирхине 11 сехетре пуçланать.

Куйбышев ГЭС-не тунă çĕрте

ЖИГУЛЕВСК (Куйбышев облаçĕ), сентябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Жигулире кĕркунне пуçланчĕ. Хура-симĕс тĕслĕ сăртсем çинче сарăхакан тата йăм-хĕрлĕ тĕслĕ çулçăсем курăнма пуçларĕç. Куйбышев гидроэлектростанцийĕн строительство площадкисем çинче халĕ хĕрӳ ĕç пырать. Кăçал гидроузелра бетонпа монтаж ĕçĕсен çĕнĕ тапхăрĕ пуçланать. Стройкăн чи пысăк площадкисенчен пĕринче—ГЭС сурчĕ пулмалли котлованра машинăсемпе механизмсем питĕ нумай. Котлованри çĕр чавас ĕçе халĕ, тĕпрен илсен, площадкăн Атăл тĕлĕнчи пайĕнче тăваççĕ. Кунта «Уралец» йышши темиçе хăватлă экскаватор тăпра кăлараççĕ. Сентябрь уйăхĕнче механизаторсен 800 пин кубометр тăпра чавса кăларса урăх вырăна куçармалла. Социализмла Ĕç Геройĕ Н. В. Ермоленко ертсе пыракан бригада чи лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Уйăх пуçланнăранпа унăн экипажĕ самосвалсем çине 11 пин кубометр тăпра тиенĕ, задание чылай иртерсе тултарнă.

Котлованăн сыранри пайĕнче монтажпа бетон шĕвекĕ хывас ĕçсем малалла пыраççĕ. Паян ГЭС никĕсĕн плитин пĕрремĕш блокне бетон хывма хатĕрлесе çитернĕ. Çак блок валли икĕ пин кубометра яхăн бетон кирлĕ пулать. Бетон ĕçĕсене хăвăртлатма икĕ хăватлă бетонасоса вырнаçтарса ĕçе янă.

«Стальмонтаж» трестĕн монтажникĕсем халĕ те бетоновознăй эстакада валли тĕкĕсем лартас тĕллĕшпе ĕçлеççĕ. Çак машинапа пулăшнипе ГЭС суртне 2,5 миллион кубометр ытла бетон хываççĕ. Паянхи куна 37 тĕкĕрен 15 тĕкĕ валли никĕссем туса хатĕрленĕ.

Атăлăн сулахай çыранĕнче, суднасем çӳрекен ялти шлюз пулмалли вырăнта, ĕçсем анлăн сарăлнă. Кунта 135 пин кубометр ытла бетон хывнă.

Октябрь уйăхĕ шучĕпе нефть кăлараççĕ

ХОДЖИАБАД (Андижан облаçĕ), сентябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Ходжиабад» нефтепромысли Фергана айлăмĕнчи чи самрăк коллектив шутланать. Çак коллектив производствăра çĕнĕ çĕнтерӳ тунă. Вăл «Андижаннефть» трестĕнче чи малтан 9 уйăхри программăна тултарнă, октябрь уйăхĕ шучĕпе шĕвĕ топливо кăларма тытăннă.

Промыслари нефтяниксем малтанхи обязательствăсене тепĕр хут пăхса тухнă, çулталлăкри плана ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне тултарма йышăннă. (ТАСС).

Чăваш АССР-ĕнчи районсенче ялхуçалăх ĕçĕсем мĕнле пынине кăтартакан СВОДКА

Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

Районсем	Кĕрхи сĕртме тунă	Тырпула капана хывнă	Авăн çапнă	Кантăр татнă	Çĕрулми кăларнă	Вăрлăхлăх курăксем пухнă	Силос хывнă	Утă-улăм катĕрленĕ	Вăл шутрап—утă
Елчĕк	41	100	70	30	6,1	118	67	77	99
Советски	40	97	51	74	3,8	77	34	42	91
Чурачăк	36	100	64	33	0,1	85	47	52	87
Красноармейски	31	98	57	62	8,8	93	48	43	79
Кувакино	31	100	93	—	1,7	100	39	34	132
Муркаш	31	93	59	70	1,1	49	59	57	107
Хĕрлĕ Чутай	30	94	62	57	3,1	76	42	39	101
Вăрнар	27	93	65	5	4,9	76	59	63	110
Ишлей	27	87	61	27	2,9	66	48	51	83
Чкаловски	27	88	65	10	0,9	84	101	50	80
Сĕнтĕр	26	98	61	50	1,8	58	40	46	102
Шăмăршă	25	95	69	2	—	82	43	23	66
Шăхасан	24	100	62	9	2,5	80	67	47	98
Элĕк	24	93	55	68	0,4	79	35	46	78
Тăвай	24	72	51	7	—	75	41	32	85
Йĕпреç	24	91	67	19	1,3	87	59	55	137
Комсомольски	23	95	65	25	1,4	72	63	62	116
Первомайски	22	90	77	10	1,5	84	46	52	99
Çĕмĕрле	21	98	71	46	—	73	45	32	93
Пăрачкав	21	88	85	—	—	74	48	40	107
Улатăр	21	78	88	—	0,7	42	42	38	88
Октябрьски	20	79	50	6	1,3	61	40	42	102
Шупашкар	20	89	57	27	3,1	62	58	52	99
Вăрмар	20	91	53	2	—	56	46	64	148
Канаш	18	90	57	6	—	44	43	43	95
Сĕнтĕрвăрри	17	67	47	26	1,4	30	31	33	126
Çĕрпӳ	15	87	60	19	1,1	102	43	33	84
Калинино	13	95	54	40	1,8	70	61	45	91
Куславкка	9	71	51	7	0,9	57	49	41	97
Етĕрне	6	100	76	57	1,8	70	37	52	97

Чăваш АССР-ĕнчи районсем государствăна тырă памалли плана сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарнине кăтартакан СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Тырă памалли плана тултарнă	РАЙОНСЕМ	Тырă памалли плана тултарнă
Шупашкар	110,3	Шăмăршă	89,0
Ишлей	106,3	Красноармейски	88,9
Шăхасан	105,7	Советски	86,9
Муркаш	103,0	Куславкка	85,9
Канаш	102,1	Сĕнтĕр	84,8
Тăвай	101,5	Вăрнар	84,4
Етĕрне	100,8	Сĕнтĕрвăрри	80,7
Чурачăк	100,7	Элĕк	79,9
Елчĕк	98,8	Октябрьски	78,9
Калинино	95,9	Йĕпреç	78,5
Вăрмар	93,4	Улатăр	76,9
Комсомольски	91,7	Хĕрлĕ Чутай	76,7
Çĕрпӳ	91,4	Кувакино	75,9
Чкаловски	90,7	Первомайски	73,5
Пăрачкав	89,0	Çĕмĕрле	68,0

Чурачăк тата Канаш районĕсенчи колхозсем государствăна тырă памалли плана тултарнă

ЧУРАЧĂК, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Телеграфпа). Чурачăк районĕнчи колхозсем сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 100,7 процент тултарнă. Тырă хатĕрлесе парас ĕçе Калинин ячĕпе, Сталин ячĕпе тăракан, «Большевик», «Слава», «Красный флот», «Союз», «Совет», «Молодая сила», «Самолет», «Стахановец» колхозсем уйрăмах лайăх туса пынă. Халĕ колхозсем МТС ĕçлесе панăшăн натуроплата тӳлемелли счетсен тăрăх государствăна тырă параççĕ.

КАНАШ, сентябрĕн 6-мĕшĕ. (Телеграфпа). Канаш районĕнчи колхозсем сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 102,1 процент тултарнă. Халĕ МТС ĕçлесе панăшăн натуроплата тӳлемелли счетсем тăрăх государствăна тырă параççĕ.

Колхозри строительство

СОВЕТСКИ. Районти чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕхе ăшă витесенче хĕл каçармалла тума тăрăшаççĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозри строительство бригади 40 ĕне вырнаçмалăх вите туса пĕтерчĕ. Кивĕ витесене юсарĕç.

Свердлов ячĕпе тăракан колхозри строительство бригади (бригадирĕ М. Афанасьев юлташ) кăçал уйрăмах пысăк ĕçсем туса иртерет. Ку бригада тиха вити, урапа-çуна лартмалли пĕр сарай, сысна вити икĕ туса пĕтерчĕ, сурăх вити тума тытăнчĕ.

Строительство ĕçĕнче платникĕсем тата строительство материалĕсем турттаракансем тăрăшса ĕçлеççĕ.

П. ВОЛКОВ.

Йĕтĕне вăхăтра пухса кĕртер

Республикăри колхозсенче йĕтĕн пухса кĕртес ĕç юлса пырать. Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне плана 65 процент кăна тултарнă.

Йĕтĕн татас енĕпе Первомайски, Вăрнар, Шăмăршă районĕсенчи колхозсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Анчах татнă йĕтĕне хатĕрлес тĕллĕшпе кунти колхозсем те юлса пыраççĕ.

Йĕтĕн пухса кĕртес, ăна вăхăтра çапса шыва хутса пултарас ĕçсене уйрăмах Калинино, Пăрачкав, Элĕк, Улатăр, Кувакино районĕсенче начар организациленĕ. Çак районсенчи колхозсем йĕтĕне кая юлса татса кĕртрĕç, халĕ ĕнтĕ ăна шыва хутса е сарса пултармалли паха вăхăта та усăсăр иртереççĕ. Пăрачкав районĕнче йĕтĕн нумай акса тăваççĕ. Апла пулин те районти партипе совет организацийĕсем тата ялхуçалăх органĕсем колхозсенче йĕтĕн пухса кĕртес ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Çавна пула ĕнтĕ сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне районти колхозсем йĕтĕн пухса кĕртмелли плана 48 процент кăна тултарнă.

Йĕтĕн пухса кĕртес ĕçре кăçал та МТС машинисемпе япăх усă кураççĕ. МТС машинисемпе сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне йĕтĕн пухса кĕртмелли плана 65,1 процент кăна тултарнă. Пăрачкав, Çĕмĕрле МТС-ĕсенче йĕтĕн татмалли машинисемпе пачах усă курмаççĕ.

Йĕтĕн акса тăвакан кашни колхозăн çитес çул акма вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлесе хăвармалла. Вăрлăх валли акнă участоксенчи йĕтĕне пухса кĕртесси çине уйрăмах тимлĕн пăхас пулать. Вĕсене чи лайăх сроксенче пухса кĕртмелле, çийĕнчех çапса, кашни килограмм вăрлăха шута илмелле.

Промышленноçа çирĕп, вăрăм, таса йĕтĕн сӳсĕ кирлĕ. Йĕтĕн акса тăвакан колхозниксемпе колхозницăсен çавна яланах асра тытмалла, государствăна пысăкрах номерлĕ сӳс парассишĕн тăрăшмалла. 16—20-мĕш номерсене ларакан сӳсе государство сурри таран хушса шутласа йышăнать. Йĕтĕн сӳсĕ тата вăрăмрах, çирĕпрех пулсан, вăл 20-мĕш номертен те лайăхрах пулсан, ăна государство тата çавăн чухлĕ хушса шутласа йышăнать.

Паха сӳс туса илес тесен, йĕтĕн хутмалли тата сармалли вырăнсене малтанах хатĕрлес пулать. Анчах та çак ĕçе тума нумай колхозсенче васкамаççĕ. Сăмахран, Улатăр, Кувакино, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Йĕпреç районĕсенче йĕтĕн хутмалли, çавăн пекех йĕтĕн сармалли вырăнсем çителĕклĕ мар.

Пирĕн республика условийĕсенче йĕтĕн нумай чухне сарса хунă, уйрăмах ăна кая юлса сарса хунă пирки, пулса çитеймест. Сарса хунă йĕтĕн çавна пула час-часах пăсăлать, юр айне кайни те пулкалать. Çавăнпа та йĕтĕне ытларах шыва хутса пултармалла тăвас пулать. Ăна сарса хурассинчен шыва хутассеи çине куçмалла. Ялхуçалăх органĕсен, агрономсен йĕтĕне шыва хутса пултарас ĕçе организацилесе ертсе пымалла, çак ĕçе мĕнле тумаллине колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Çанталăк сивĕтиччен йĕтĕне хутса кăларас, типĕтес ĕçсене пĕтĕмпех вĕçлемелле.

Йĕтĕне ăшă, çемçе шыва хутмалла. Мочилăсене чавнă çĕрте извеçлĕ тата тимĕр тутăхлă йĕрсем пулмалла мар. Шурлăхри шыв йĕтĕн хутма пачах юрăхсăр.

Йĕтĕн хутма чавнă шăтăкан тĕпне айăккисене йывăçпа, хăмапа е чулпа çирĕплетсен аван. Çавăн пек çирĕплетмен шăтăксенче йĕтĕн шывра вараланать, сӳс пахалăхĕ чакать. Йывăçпа, чулпа е тата çавăн пек çирĕплетмен шăтăксенче (мочилăсенче) йĕтĕне лайăх пултарса çитерме йывăртарах. Унта хутнă йĕтĕне тата тепĕр вăхăт сарса хунипе пултармалла пулать. Çавăнпа йĕтĕн хутма шăтăксене малтанах хатĕрлесси çине тимлĕн пăхни кирлĕ.

Йĕтĕн çурăмĕсене шăтăка тирпейлĕн ретĕн-ретĕн хурса тухмалла. Малтанхи ретре çурăмĕсене, пуçĕсене пĕрле туса, чĕпĕсене [illegible] сăвăнтерсе хураççĕ. Иккĕмĕш ретри çурăмĕсене малтанхи ретрен сӳлерех хурса пыраççĕ. Кашни кубометр шыва 40 килограмм йĕтĕнрен ытла хутмалла мар.

Хутнă йĕтĕн çине çапă хураççĕ, çапă çине—хăмасем е шертĕсем. Çиеле чулсем хурса пусараççĕ. Пусарнă хыççăн йĕтĕн çинче пĕрмаях 10—15 сантиметр хулăнăш шыв тухса тăмалла.

Хутнă йĕтĕне сеçрипе пусăрăнтарма юрамасть, мĕншĕн тесен йĕтĕн пăсăлать. Çавăн пекех шăтăксенче йĕтĕне пулса çитиччен вырттарма та кирлĕ мар. Туна сумĕнчен сӳс уйăрăлма пуçланă пулсан, йĕтĕне шăтăкран кăларса сарса пăрахас пулать. Сарса вырттарнă вăхăтра хутса кăларнă йĕтĕн хăвăрт пулса çитет.

Йĕтĕне кирек ăçта хутнă пулсан та, вăл пулса пынине, тĕтăшах сăнаса тăрас пулать. Йĕтĕн çирĕп е çĕрĕк пулассин ăна хутса пултарма пĕлнинчен нумай килет. Хутнă вырăнта çителĕклĕ тытмасан йĕтĕн сӳсĕ шултăра пулать, ытларах тытсан—сӳс çирĕплĕх енчен начартарах пулать, тĕссĕрленет, тылланă чухне те тăкаксем нумай пулаççĕ.

Йĕтĕне кӳлĕсемпе сырмасенче те, шыв тăракан лакăмсенче те хутса пултарма юрать. Ĕçмелли е пулă ĕрчетекен шывра кăна йĕтĕн хутмаççĕ. Шыв вăйлă юхакан вырăнта та йĕтĕн хутма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен унта йĕтĕне пултаракан бактерисем пухăнса тăма пултараймаççĕ. Пысăк шывсенче йĕтĕн хăвăртрах пулать.

Йĕтĕне хутса пултармалли шăтăксемпе вырăнсене кашни колхозрах çителĕклĕ хатĕрлеме пулать.

Йĕтĕн продукцине тăккаламасăр тирпейлĕн колхозсенче сушилкăсемпе авăнсене лайăх ĕçлеттерни кирлĕ. Вĕсенче йĕтĕн типĕтме халех хатĕрленмелле.

Пысăк тухăçлă йĕтĕншĕн пыракан кĕрешӳн ответлă тапхăрне — йĕтĕне пухса кĕртес тата тирпейлес тапхăра йĕркеллĕ иртермелле, государствăна пысăк пахалăхлă йĕтĕн сӳсĕ хатĕрлесе памалла.

В. МИХАЙЛОВ, агроном.

Совет Çарĕнче тата Тинĕс-Çар Флотĕнче служба срокне татнă çар çыннисене киле ярасси çинчен тата Совет Çарне илмелли черетлĕ призыв çинчен

ССР Союзĕн Оборона Министрĕн ПРИКАЗĔ

1953 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕ. № 80. Мускав хули.

Пурне те тивĕç çар обязанноçĕ çинчен калакан Закон тăрăх çапла приказ паратăп:

1. Совет Çарĕн, Тинĕс-Çар Флотĕн, чикĕри тата шалти çарсен ротĕнче действительнăй çар службин закон кăтартса панă срокĕсене татнă салтаксене, матроссене, сержантсене тата старшинасене запаса ярас.

2. Çак приказăн 1-мĕш пунктĕнче кăтартнă çар çыннисене киле янă май, 1934 çулта çуралнă, льготăпа усă курман тата çара илессипе тепĕр срока хăварман çамрăксене, çавăн пекех тата призыв çулĕнчи гражданссене, вĕсен тантăшĕсем действительнăй çар службинче тăраканнисене, çара илессипе тепĕр вăхăта хăварнă срок иртнисене, Совет Çарĕнче, Тинĕс-Çар Флотĕнче, чикĕри тата шалти çарсенче действительнăй çар службинче пулма илес.

3. Çак приказа мĕнпур ротăсенче, эскадронсенче, батарейăсенче, эскадрильясенче, карапсем çинче вуласа памалла.

ССР Союзĕн Оборона Министрĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. БУЛГАНИН.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ЛАРĂВĔ

Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ тата 1952 çулхи бюджета мĕнле пурнăçлани çинчен

Чăваш АССР Финанс министрĕ А. В. СОМОВ юлташ тунă доклад

Депутат юлташсем! Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн [illegible] совет халăхĕ Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ [illegible] решенийĕсене хавхаланса пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн хастарлă кĕрешнĕ вăхăтра пулса иртет.

Чăваш республикинчи ĕçхалăхĕ, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕн решенийĕсене пĕтĕм чĕререн ырласа йышăнчĕ. Сессире СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ тухса каланине, вăл Совет государствин шалти тулашри политикине каласа панине пĕтĕм совет халăхĕ ырларĕ.

Совет Союзĕ пĕрмаях миршĕн кĕрешет тата халăхсем пĕр-пĕрине килĕштерсе пурăнмалла тăвассишĕн тăрăшать, çавăнпа пĕрлех вăл хамăр Тăван çĕршыв сыхлăхне çирĕплетме мирлĕ ĕçсем туса пырать.

Совет Союзĕ мире юратнине Совет государствин бюджечĕ те кăтартса парать. Пирĕн бюджет—мирлĕ строительство бюджечĕ, çавăнпа та вăл пирĕн пĕтĕм халăх [illegible].

СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче йышăннă государство бюджечĕ тата Ялхуçалăх налогĕ çинчен йышăннă закон халăхăн тĕп интересĕсене тивĕçтерессĕ, Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви социализмла халăх хуçалăхне пĕрмай вăйлатса пырассишĕн, ĕçлекенсен пурнăçне малалла пур майсемпе те лайăхлатса пырассишĕн тăрăшнине кăтартса парассĕ.

Пирĕн мухтавлă социализмла Тăван çĕршыври ĕçлекенсем партипе правительство вĕсен ырлăхĕшĕн тăрăшни çине паттăрла ĕçсемпе отвечатлессĕ; пирĕн çĕршыври рабочисен, колхоз хресченĕсен, интеллигенцин ĕçри активлăхĕ кунтан-кун ÿссе пырать, Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ, Совет обществин морально-политикăлла пĕрлĕхĕ çирĕпленет.

Коммунистсен партийĕ тата Совет Правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăрса, совет халăхĕ хамăр çĕршыври коммунизм тăвас çулпа çирĕппĕн те шанчăклăн малалла пырать.

Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи бюджетне пурнăçлани

Депутат юлташсем! Совет халăхĕн туслă çемйинче, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Чăваш республикинчи ĕçхалăхĕсем вăрçă хыççăнхи çулсенче хуçалăхпа культура строительствинче чылай ÿсĕмсем турĕç.

1953 çулта социализмла промышленносри работниксем малтанхи çулсенчен ытларах продукци пачĕç. Кăçал вĕсем тата ăнăçларах ĕçлерĕç. 1953 çулăн малтанхи çурçуллăхĕнче производство программине облаçри предприятисем 101,6 процент, районти промышленность предприятийĕсем 106,3 процент тултарчĕç.

Колхоз уй-хирĕнчи ĕçченсем пысăк ÿсĕм турĕç. 1952 çулта унччен çулхинчен ытларах тырпул туса илчĕç. Государствăна тыррă памалли плана республика кĕске срокра тултарчĕ. 1953 çулта тырпула пухса кĕртес ĕçсем тата государствăна тырпулпа выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем парасси ăнăçларах пулса пырассĕ.

Анчах та, 1952 çулта хăшпĕр предприятисем, суту-илÿ организацийĕсем, автомобиль транспорчĕ çителĕксĕр ĕçленĕ пирки усламран илмелли укçа-тенкĕ енĕпе бюджета 2.812 пин тенкĕ, оборотран илмелли налог енĕпе 3.714 пин тенкĕ параймарĕç. Хăшпĕр районсенче налог укçи тата заем укçи пуçтарса çитереймен. Çавна пула 1952 çулхи бюджета тупăшсем енĕпе 333.108,0 пин тенкĕ е 97,7 процент, расходсем енĕпе 332.948,0 пин тенкĕ е 98 процент кăна тултарнă. 1952 çулхи бюджета çителĕксĕр тултарнăшăн республика правительствине тата Финанс министерствине Россия Федерацийĕн Министрĕсен Совечĕ хытă та тĕрĕс критиклерĕ.

1952 çулхи бюджетран халăх хуçалăхне 28.765 пин тенкĕ е планпа палăртнинчен 104,7 процент хывнă, социально-культурăллă ĕçсем валли 268.151 пин тенкĕ е бюджетри пĕтĕм расходсен 80,5 проценчĕ кайнă.

Чăваш АССР-ĕн 1952 çулхи республика бюджечĕ енĕпе расходсем 104.172 пин тенкĕ, районсемпе хуласен тата ял Советсен бюджечĕсем енĕпе — 254.958,7 пин тенкĕ пулнă.

Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕ

Депутат юлташсем! Государствăн халăх хуçалăхне аталантармалли 1953 çулхи планĕнче пирĕн республика умне халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене малалла аталантарас енĕпе, тавар çаврăнăшне пысăклатас енĕпе, ĕçлекенсен материальнăй пурнăçне культура шайне малалла ÿстерсе пырас енĕпе пысăк задачăсем лартнă.

Пирĕн республикăн Министрĕсен Совечĕ Верховнăй Советăн тăваттăмĕш сессийĕнче пăхса тухса çирĕплетме Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджетне тăратать. Çав бюджета пĕтĕмпех халăх хуçалăхĕн планĕпе килĕштерсе тунă, бюджет асăннă пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçлама май парать.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ республикăн 1953 çулхи бюджетĕнче тупăшсемпе расходсем пĕтĕмпе 348.735,2 пин тенкĕ пулмалла тума йышăнчĕ. Бюджетра 1953 çул пуçламăшĕнче тата вĕçĕнче тепĕр çула куçакан укçа-тенкĕ 14.218 пин тенкĕ пулмалла, районти бюджетсене 35.246,7 пин тенкĕ дотаци пама палăртнă. 1953 çулхи бюджетра, пĕлтĕрхи бюджетпа танлаштарсан, укçа 15.787,2 пин тенкĕ ытларах пулать.

Чăваш АССР бюджетĕнчи тупăшсен тĕп пайĕ социализмла хуçалăхран пухăнать. Çавăн пек тупăшсем 258.135 пин тенкĕ пухăнмалла. Çак тупăшсем, 1952 çулхипе танлаштарсан, 58.751 пин тенкĕ чухлĕ ÿсессĕ, вĕсен бюджетри удельнăй виси 1952 çулта 60 процент пулнă пулсан, 1953 çулта 74,1 процент таран ÿсет. Проектра государство предприятийĕсемпе хуçалăх организацийĕсен усламĕнчен бюджета 29.120 пин тенкĕ, пĕлтĕрхинчен 8.032 пин тенкĕ ытларах уйăрса пама палăртнă. Çак тупăшсем 1953 çулта государство предприятийĕсемпе хуçалăх организацийĕсенче производствăна ÿстернĕ, тавар çаврăнăшне пысăклатнă, продукцин хăйне хаклăх хакне йÿнетнĕ тата вĕсене усламлă ĕçлекен тунă май ÿсессĕ.

Бюджетра Чăваш АССР-ĕнчи çăмăл тата апат-çимĕç промышленность предприятийĕсен усламĕнчен илекен укçа-тенкĕн хисепĕ 4.055 пин тенкĕ ÿсмелле, çакă вăл иртнĕ çулта бюджета асăннă тупăшсен чăннипе мĕн чухлĕ пухăннинчен 1.281 пин тенкĕ ытларах пулать.

Республикăри коммунальнăй хуçалăхран 9.620 пин тенкĕ, пĕлтĕрхинчен 2.277 пин тенкĕ ытларах, Чăваш АССР Суту-илÿ министерстви предприятийĕсенчен 6.383 пин тенкĕ пухăнмалла. Çул-йĕрпе автомобиль транспорчĕн предприятийĕсен 3.200 пин тенкĕ памалла.

Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджетне оборотран илмелли налог укçи вăхăтра тата пĕтĕмпех пухăннин пĕлтерĕшĕ питех те пысăк. Пирĕн республика 1952 çулта çав налогăн 20,3 процентне илнĕ, хальхи 1953 çулхи бюджет тăрăх çав налогăн 28,7 проценчĕ таран республикăна юлать, çак налог енĕпе республика бюджетне пĕтĕмпе 171.015 пин тенкĕ пухăнмалла, 1953 çулта 113.024 пин тенкĕ пухăннă. Кăçал вара, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 57.991 пин тенкĕ ытларах пухăнмалла.

РСФСР Правительстви 1953 çулта пирĕн республикăра оборотран илмелли налога пĕтĕмпе 594.600 пин тенкĕ пухма палăртнă, çав шутран ССР Союзĕпе РСФСР-ăн государство бюджетне 423.585 пин тенкĕ памалла.

Çапла вара Чăваш АССР территорийĕнче оборотран илмелли налог вăхăтра тата пĕтĕмпех пухăнниничен Чăваш АССР бюджечĕ тăрăх тума палăртнă ĕçсем валли кăна мар, Пĕтĕм Союзри ĕçсене, государство мероприятийĕсене пурнăçлама укçа-тенкĕ йĕркелĕ парса тăрасси те килет.

Усламран илмелли укçа-тенкĕсĕр тата оборотран илмелли налогсăр пусне, государствăна кооперации предприятийĕсем тата организацисем бюджета хуçалăхран ытти тÿлевсене 60.513 пин тенкĕ памалла.

1953 çулта социализмла хуçалăхран кĕрекен тупăшсен хисепĕ чылай ÿсет, çав вăхăтрах халăхран пухăнмалли укçа-тенкĕ хисепĕ чакать. Государство заемĕсене сарнинчен пухăннă укçа бюджетра 20.870 пин тенкĕ пулмалла, çакă вăл 1952 çулта пухăннинчен 39.671 пин тенкĕ сахалрах. Халăхран государство налогĕсем илнипе пухăнакан укçаран бюджета 69.734 пин тенкĕ уйăрса памалла.

СССР Верховнăй Совечĕ Ялхуçалăх налогĕ çинчен çĕнĕ закон йышăннă май Чăваш АССР-ĕнче çав налогăн пĕтĕм хисепĕ кăçал 42.708 пин тенкĕ чакать, е пĕлтĕрхинчен 44,4 процент сахалтарах пухăнмалла, ситес 1954 çулта ялхуçалăх налогĕн хисепĕ, 1952 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут сурă ытла чакать.

Законра ялхуçалăх налогне чакармалла туни, çав налога колхозниксен çине хурас йĕркене улăштарни, çавăн пекех тата партипе правительство ялхуçалăхне малашне тата хăвăртрах вăйлатса пымалла ĕçсене тума палăртни колхозсемпе колхозниксене ялхуçалăхĕн кая юлнă отраслĕсене аталантарма хавхалантарать. Çав ĕçсене колхозниксен общественнăйла интересĕсемпе харпăр хăй интересĕсене тĕрĕс сыхăнтарса пырас, колхоз хресченĕсен материальнăй пурнăçне лайăхлатас шутпа тăвассĕ.

Чăваш АССР-ĕн 1953 çулхи бюджечĕн расходĕсем

Промышленноса, ялхуçалăхне, коммунальнăй хуçалăха тата халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсене, социально-культурăллă ĕçсем валли паракан укçа-тенкĕ Чăваш АССР бюджечĕн тĕп расходĕсем пулса тăрассĕ. 1953 çулта çав ĕçсене пурнăçлама 317.562,3 пин тенкĕ е республика бюджетĕнчи пĕтĕм укçа-тенкĕн пуринчен тăватă пайне ытла парассĕ, çав шутран: халăх хуçалăхне—37.360 пин тенкĕ, социально-культурăллă ĕçсем валли—280.202 пин тенкĕ памалла. Управлени органĕсене тытса тăма 30.114 пин тенкĕ тата ытти ĕçсем валли 1.059 пин тенкĕ пама палăртнă.

Укçа-тенкĕ çав асăннă ĕçсене тума панинчен çакă курăнать: Чăваш АССР бюджечĕ халăх хуçалăхне малалла аталантарас, культура строительствине вăйлатас, ĕçлекенсен пурнăçне лайăхлатас задачăсене пурнăçласа тăвать.

Халăх хуçалăхне хывмалли укçа-тенкĕрен промышленноса — 3.029 пин тенкĕ, ялхуçалăхне—10.401,2 пин тенкĕ, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммунальнăй хуçалăха—12.676,0 пин тенкĕ, çул-йĕр хуçалăхĕпе транспорта — 2.280 пин тенкĕ каять, халăх хуçалăхне бюджетран хываван укçа-тенкĕ хисепĕ, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 6.774 пин тенкĕ е 23,5 процент чухлĕ ÿсет.

Çакна шута илмелле: бюджетран паракан укçасăр пусне, халăх хуçалăхне предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен хăйсен укçа-тенкинчен 9.248 пин тенкĕ памалла. Çапла вара республика халăх хуçалăхĕ валли мĕнпур тупăшсем енĕпе 1953 çулта 46.608 пин тенкĕ памалла, çакă вăл 1952 çулхинчен 10.483 пин тенкĕ ытларах пулать.

1953 çулта Чăваш АССР-ĕнчи хуçалăхăн мĕнпур отраслĕсенче капитальнăй ĕçсен пысăк программине пурнăçласа пырассĕ. Çак ĕçсене тума 22.621 пин тенкĕ, çав шутран; бюджетри укçа-тенкĕ шучĕпе — 16.625 пин тенкĕ, предприятисен хăйсен ресурсĕсен шучĕпе тата строительство хакне йÿнетнĕ шутпа — 5.996 пин тенкĕ расходламалла. Капитальнăй ĕçсем тума каякан укçа-тенкĕ хисепĕ кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 9.056 пин тенкĕ, çав шутран бюджет шучĕпе 7.315 пин тенкĕ ÿсет.

Бюджетран капитальнăй ĕçсем валли каякан укçа-тенкĕ кăçал, 1952 çулхипе танлаштарсан, промышленность енĕпе 1.092 пин тенкĕ, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммунальнăй хуçалăх енĕпе—4.586 пин тенкĕ ÿсет, шкулсемпе больницăсем лартма пĕлтĕрхинчен 3.073 пин тенкĕ ытларах парассĕ.

Республика бюджетĕнче социально-культурăллă ĕçсем валли паракан укçа-тенкĕ хисепĕ уйрăмах пысăк. 1953 çулта çав ĕçсем валли 280.202 пин тенкĕ пама палăртнă, çакă вăл бюджетри мĕнпур расходсен 80,4 проценчĕ пулать. Ку шутран: халăха вĕрентес ĕç валли—192.168 пин тенкĕ е бюджетри мĕнпур расходсен 55,1 проценчĕ, сывлăха сыхлас ĕçпа физкультура валли—84.896 пин тенкĕ, социальнăй обеспечени валли 3.138 пин тенкĕ каять. Иртнĕ çулта чăннипе мĕн чухлĕ расходланипе танлаштарсан, кăçал халăха вĕрентес ĕç валли каллех расходсем 2.672 пин тенкĕ ытларах пулассĕ.

Республикăри шкулсенче 1953—1954 вĕренÿ çулĕнче 173.095 çын, çав шутран 5—10-мĕш классенче 114.395 çын, пĕлтĕрхинчен 6.856 çын ытларах вĕренмелле. Специальноса вĕренмелли вăтам шкулсенче 2.212 çын вĕренмелле.

Пĕлтĕрхи вăтам шкулсенче вĕрентес ĕçе анлă сарма условисем хатĕрлеме бюджетран шкулсен интерначĕсене тытса тăма 657 пин тенкĕ пама палăртнă.

Ача-пăча учрежденийĕсене тытса тăма бюджетран 14.[illegible] пин тенкĕ пама палăртнă. Ача çуртĕсенче тата ача садĕсенче 4.200 ача, çав шутран ача çурчĕсенче 2.300 ача пăхса ÿстермелле.

Проектра библиотекăсене, клубсене, культура çуртĕсене тата ытти культурăпа çутĕç учрежденийĕсене тытса тăма 11.833 пин тенкĕ пама палăртнă. 1953 çулта ялсенче çĕнĕрен 82 библиотека уçăлать, çавăн пекех ялти клубсен шучĕ те нумайланать.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕçпе физкультура енĕпе тухакан расходсем 1953 çулта 9.352 пин тенкĕ чухлĕ ÿсессĕ. Чир-чĕртен сипленекен учрежденисемпе профилактика учрежденийĕсем валли 69.377 пин тенкĕ, ача-пăчасене чир-чĕртен сыхлама вĕрентекен профилактика учрежденийĕсем валли 6.520 пин тенкĕ, санитари ĕçĕсем валли 5.754 пин тенкĕ пама палăртнă.

Халăх сывлăхне сыхлас ĕç валли уйăрса панă укçа-тенкĕ больницăсене, диспансерсене, ача çуратмалли çуртсене, санаторисене, ача-пăча учрежденийĕсене тытса тăма, çавăн пекех тата хуласемпе ялсенчи больницăсенче койкăсен шучне ÿстерме çителĕклĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ больницăсемпе ытти медицина учрежденийĕсене укçа хушса пама йышăннипе пирĕн республика бюджетĕнче шута илнĕ. Кăпе-тумтир илме 650 пин тенкĕ, хуçалăх инвентарĕпе медицина оборудованийĕ илме 400 пин тенкĕ, чир-чĕртен сиплекен учрежденисен çурчĕсене тĕпрен юсама, чирлĕ çынсене паракан апата лайăхлатма 400 пин тенкĕ хушса парассĕ.

Больницăсем лартма 3.380 пин тенкĕ, иртнĕ çулхинчен 3.380 пин тенкĕ ытларах пама палăртнă.

Çав укçапа тĕрĕс усă курсан, халăха медицинăпа тата санитари енĕпе пулăшассине чылай лайăхлатма пулать.

Социальнăй страхованипе социальнăй обеспечени валли те укçа-тенкĕ 1952 çулхинчен ытларах пама палăртнă.

Чăваш АССР-ĕнчи районсемпе хуласен 1953 çулхи бюджечĕсем

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ палăртнă тăрăх, республикăри районсемпе хуласен 1953 çулхи бюджечĕсем пĕтĕмпе 266.575,2 пин тенкĕлĕх пулмалла.

Чăваш АССР-ĕнчи уйрăм районсен тата республикăна пăхăнса тăракан хуласен бюджечĕсене çакăн чухлĕ çирĕплетме тăрататпăр:

	(пиншер тенкĕпе)
Улатăр районĕ	7769,9
Элĕк районĕ	6339,6
Вăрнар районĕ	8725,0
Йĕпреç районĕ	8895,2
Пшлей районĕ	5743,7
Калинино районĕ	6274,5
Канаш районĕ	7022,1
Куславкка районĕ	9603,8
Комсомольски районĕ	7424,6
Красноармейски районĕ	6812,3
Хĕрлĕ Чутай районĕ	8210,3
Куванино районĕ	4623,7
Сĕнтĕрвăрри районĕ	7932,9
Муркаш районĕ	5384,1
Октябрьски районĕ	6496,8
Первомайски районĕ	6965,9
Пăрачкав районĕ	7860,6
Советски районĕ	5720,3
Сĕнтĕр районĕ	6072,9
Вăрмар районĕ	9695,4
Сĕрçÿ районĕ	9162,8
Шупашкар районĕ	6891,7
Чкаловски районĕ	7359,7
Чурачăк районĕ	6050,1
Шăмăршă районĕ	5992,9
Шăхасан районĕ	6754,8
Сĕмĕрле районĕ	12829,1
Етĕрне районĕ	7786,5
Елчĕк районĕ	8677,1
Тăвай районĕ	6751,3
Шупашкар хули	23719,9
Улатăр хули	13927,6
Канаш хули	7098,3

Районсемпе хуласен бюджечĕсем республика бюджечĕн уйрăмли пайĕ пулса тăрассĕ, вĕсем çултан-çул ÿссе пырассĕ. Çак бюджетсен пысăкăшĕ, вăрçă умĕнхи вăхăтрипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн ÿснĕ: 1940 çулта 146.141,7 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1953 çулта 266.575,2 пин тенкĕ пулать. Районсемпе хуласен бюджечĕсем ÿснĕ май ĕççыннин депутачĕсен районсемпе хуласенчи Совечĕсен исполкомĕсен бюджетсене пурнăçлассишĕн, пĕтĕм финанс ĕçне тĕрĕс организацилессишĕн ответлăхĕ ÿсет. Вырăнти Советсем умĕнче çавăн пек задача тăрать: вĕсен бюджета пухăнмалли укçа-тенкĕ пĕтĕмпех пухăнмалла тата вĕсемпе тĕрĕс, тирпейлĕ усă курмалла.

Анчах, калас пулать, ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсен исполкомĕсем финанс ĕçĕ çине кирлĕ пек пăхмассĕ,—1952 çулхи бюджета пурнăçласа çитереймерĕç. Вĕсем вырăнти промышленность предприятийĕсен, артельсен, промысла кооперацийĕпе суту-илÿ организацийĕсен ĕçне çителĕксĕр тĕрĕслесе тăрассĕ, халăхран тата колхозсенчен налог укçи тата хресченсенчен заем укçи вăхăтра тата пĕтĕмпех пухса çитермерĕç. Çавна май бюджета пухăнмалли укçа-тенкĕ пухăнса çитмен, налог енĕпе парăмсем пулса тăнă.

Сĕмĕрле, Октябрьски, Хĕрлĕ Чутай, Калинино тата Элĕк районĕсенче финанспа бюджет ĕçĕ уйрăмах япăх пулса пырать. Бюджета пухăнмалли тупăшсем пухăнса çитмен пирки çав районсенче шкулсене, сыватакан тата культурăпа çутĕç учрежденийĕсене укçа-тенкĕ вăхăтра парса тăман, ĕç укçи правительство кăтартнă вăхăтра памасăр пулнă. Асăннă районсенче ĕççынни депутачĕсен район Совечĕсен исполкомĕсем ĕçе лайăхлатма, финанспа бюджет ĕçне йĕркелесе яма, налогсемпе ытти тÿлевсем тăрăх пухмалли укçа-тенкĕ пухса çитерме тăрăшмассĕ. Муркаш тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче бюджетри укçа-тенкĕ расходлас енĕпе йĕркене пăснисем пулнă.

Ялсен бюджечĕсем, бюджета укçа-тенкĕ пухăнмалли майсем çултан-çул ÿсессĕ. 1952 çулта ялсен бюджечĕсем 35.295,6 пин тенкĕ пулнă. Çак бюджетсен сумми 1940 çулхипе танлаштарсан икĕ хут ытла ÿснĕ. Ялсен бюджечĕсенчен чылай шкулсем, вулав çурчĕсем, ялти клубсемпе библиотекăсем, фельдшер пункчĕсем тата трахомăран сыватакан пунктсем, ача яслисемпе сачĕсем укçа илсе тăрассĕ.

РСФСР Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕнче РСФСР-ăн 1953 çулхи Государство бюджечĕ çинчен тата 1951 тата 1952 çулсенчи бюджетсене пурнăçлани çинчен тунă докладра, çавăн пекех депутатсем каланă сăмахсенче те ял Совечĕсен бюджет ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртнă. Кун пек ситменлĕхсем пирĕн республикăри ял Совечĕсен финанс ĕçĕнче те пур. Чăваш АССР-ĕнчи ялсен 1952 çулхи бюджечĕсене тупăшсем енĕпе 83,5 процент, расходсем енĕпе—90,7 процент çеç тултарнă. Советски, Красноармейски, Шăхасан тата Шупашкар районĕсенче ялсен бюджечĕсене уйрăмах япăх пурнăçлассĕ.

Уйрăм районсенче бюджет енĕпе ял Совечĕсен прависене пăснă. Райисполкомсем ялсен бюджечĕсене финанспа бюджет комиссийĕсен председателĕсене чăннисĕр пăхса тухса çирĕплетнĕ, тупăшсенчен мĕн чухлĕ уйăрса памаллине улăштарнă май вăхăтра расчет тумасăр, хушса памалли укçа-тенкĕ вăхăтра куçарса паман, ял Совечĕсенчен ыйтмасăрах вĕсен бюджетĕнчи укçа-тенкĕ илни те пулнă.

Предприятисен, организацисемпе учрежденисен финанспа хуçалăх ĕçне тĕпренех лайăхлатар

Депутат юлташсем! Республикăн 1953 çулхи бюджетне пухăнмалли тупăшсен тĕп пайĕ социализмла хуçалăхран пухăнать, çак тупăшсем бюджетра 74 процент йышăнассĕ. Çапла ĕнтĕ, халăх хуçалăхĕн планне лайăх пурнăçланинчен, предприятисен, артельсен, промысла кооперацийĕн, хуçалăх организацийĕсен ĕçне лайăхлатнинчен бюджета ăнăçлă пурнăçласси килет.

Çав организацисен руководителĕсен продукци туса кăларассине хисепĕ енĕпе те, ассортимент енĕпе те пĕтĕмпех пурнăçламалла, продукцин хăйне лараван хакне чакарассишĕн вăйлăрах кĕрешмелле, шалти резервсене палăртмалла тата хуçалăх расчетне çирĕплетмелле.

Анчах, çакна палăртас пулать, министерствăсен, управленисен руководителĕсем нумайăшĕ предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен финанспа хуçалăх ĕçне тĕплĕн пăхса тăмассĕ, предприятисем производство планне тултарманнине, продукцин хăйне лараван хакне йÿнетмелли задание пурнăçламаннине, тирпейлĕх режимне пăхăнманнине, çапла вара хăйсен бюджет умĕнчи обязательстивисене пурнăçламаннине килĕшсе тăрассĕ.

Уйрăмах Вырăнти промышленность министерствин предприятийĕсен финанспа хуçалăх тĕлĕшĕнчи кăтартăвĕсем çителĕксĕр. 1952 çулта çав министерствăна пĕрремĕн çăмăл промышленносăн 8 предприятийĕнчен 3 предприятийĕ кăна плана тултарнă. Асăннă предприятисене чĕртавара перекетлĕн расходламассĕ, çавна пула 798 пин тенкĕ ытлашши расходласа пĕтернĕ, хуçалăхпа сыхăнса тăман тăкаксем тунă. Финанспа кредит тата расчет дисциплинине пăснăшăн çав предприятисем штрафсемпе пенисем 217 пин тенкĕ тÿленĕ. Çăмăл промышленность предприятийĕсем продукцин хăйне лараван хакне 1 миллион та 397 пин тенкĕлĕх ÿстерсе янă, çакă пĕтĕм продукци хакĕн 4,29 проценчĕ чухлĕ пулать. Вĕсем государство умĕнчи хăйсен тивĕçне пурнăçлайман, бюджета 674 пин тенкĕ парса çитереймен.

Вырăнти промышленность министерстви çăмăл промышленность предприятийĕсен финанспа хуçалăх кăтартăвĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе 1953 çулта та мерăсем йышăнман. Правительство постановленийĕ министерствăсен, управленисен тата ведомствăсен руководителĕсене предприятисемпе хуçалăх организацийĕсен отчечĕсене кашни кварталтах пăхса тухма хушать. Анчах Вырăнти промышленность министрĕ Бобров юлташ 1952 çулти тата 1953 çулти пĕр кварталта та предприятисен руководителĕсенчен пĕринчен те отчетсем итлеме вăхăт тупайман.

Çăмăл промышленноспа апат-çимĕç промышленность министерстви çăмăл промышленность предприятийĕсен финанспа хуçалăх ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнма тивĕç.

Строительство материалĕсем тăвакан промышленность Управленийĕн предприятийĕсем те 1952 çула япăх кăтартусемпе вĕçлерĕç. Çак Управлени предприятийĕсем производствăри оборудованипе, машинăсемпе тата кирпĕч типĕтмелли сарайсемпе япăх усă курнă. Ивановăри кирпĕч заводĕнче ДП-2 пресс 1952 çулхи производство сезонĕнче ĕç вăхăчĕн 37 проценчĕ чухлĕ ахаль ларнă. Çавна пула завод чĕрĕ кирпĕч 3 миллион штук парса çитереймен; чĕрĕ кирпĕч ситменнипе камавасем 1.974 сехет ахаль ларнă.

Производствăна организацилес тĕлĕшпе çак Управленин ытти заводĕсенче çавăн пек ситменлĕхсемех пулнă. Çавна пула вĕсем продукци туса кăлармалли плана тултарайман, продукцин хăйне лараван хакне 1.440 пин тенкĕлĕх ÿстерсе янă тата браксене пула кăна 466 пин тенкĕлĕх убыток тÿснĕ.

Производство планĕсене пурнăçлас, браксене пула убытоксене чакарас, производство оборудованийĕпе туллинрех усă курас, туса кăларакан продукцин хăйне лараван хакне йÿнетес, материалсемпе укçа-тенкĕ расходлас енĕпе перекетлĕх режимне çирĕп пăхăнса тăрас тĕлĕшпе ĕçсене лайăхлатас вырăнне, строительство материалĕсем тăвакан чылай предприятисен руководителĕсем республика правительствинчен укçа-тенкĕ хушса пама ыйтассĕ.

Строительство материалĕсем тăвакан промышленность Управленийĕн çĕнĕ руководстви строительство материалĕсем тăвакан предприятисен руководителĕсен çаннашкал сиенлĕ шухăш-кăмăлĕсене пĕтерес пулать тата кашни предприятин финанспа хуçалăх тĕлĕшĕнчи ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

Пурăнмалли çуртсем, коммунальнăй хуçалăх предприятийĕсем лартма, хуласемпе район центрĕсене илемлетсе лайăхлатма бюджетран кашни çулах укçа-тенкĕ чылай уйăрса парассĕ. Çав укçа-тенкĕпе туллин, пĕлсе, перекетлĕн усă курсан, халăхăн коммунальнăй хуçалăх тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе чылай лайăхлатма пулнă пулĕччĕ. Сапах та çакна палăртас пулать: халăхăн коммунальнăй хуçалăх тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçре, коммунальнăй тата пурăнмалли çурт строительстви валли, хуласене илемлетме уйăрса паракан укçа-тенкĕпе усă курас ĕçре пирĕн халĕ те ситменлĕхсем нумай. Çав ĕçсем валли уйăрса паракан укçа-тенкĕпе туллин усă курмассĕ, укçа-тенкĕ расходлас ĕçре усăсăр тăкаксем нумай пулассĕ. Пурăнмалли çуртсене юсас ĕçĕн тата хуласене илемлетес ĕçĕн пахалăхĕ çителĕксĕр, çав ĕçсем валли укçа-тенкĕ расходлани вирлĕ таран усă параймасть. Капитальнăй строительство ĕçĕсем вăхăтра пулса пымассĕ, хăшпĕр объектсене вара темиçе çул хушши тăвассĕ. 1952 çулта электростанцисем лартма, электричество линийĕсене тата водопровода анлăлатма, Шупашкар хулинче çĕнĕ мунча лартма бюджет тăрăх 1.844 пин тенкĕ уйăрса пама палăртнăччĕ, чăннипе илсен, 829 пин тенкĕ кăна расходланă. Асăннă ĕçсем валли уйăрса панă укçа-тенкĕпе çителĕксĕр усă курнипе пула, РСФСР Министрĕсен Совечĕ çав объектсене тума уйăрса панă укçа-тенкĕ лимитне чакарма, хамăр республикăра усă курман укçа-тенкĕ капитальнăй строительство ĕçĕсене ăнăçлă туса пыракан ытти крайсемпе облаçсене уйăрса пама йышăнчĕ.

Çулсемпе кĕперсем тума, йывăçсем лартма тата благоустройство енĕпе ытти ĕçсене тума 1952 çулта 4.126 пин тенкĕ уйăрса панă пулнă, анчах çав укçа-тенкĕпе те туллин усă кураймаи. Пурăнмалли çуртсемпе коммунальнăй предприятисем лартма тата благоустройство валли 1953 çулхи бюджет тăрăх 12.876 пин тенкĕ уйăрса пама палăртнă, çакă вăл пĕлтĕрхинчен 4.391,0 пин тенкĕ ытларах пулать. Çапах кăçалхи çичĕ уйăхри данныйĕсем уйăрса панă укçа-тенкĕпе питĕ çителĕксĕр усă курнине кăтартса парассĕ. Чăваш АССР Коммунальнăй хуçалăх министерствин тата ĕççынни депутачĕсен хуласемпе районсенчи Совечĕсен исполком председателĕсен асăннă ситменлĕхсене пĕтермелле, бюджет тăрăх коммунальнăй хуçалăх, хуласемпе район центрĕсен благоустройстви ĕçĕсем валли уйăрса паракан укçа-тенкĕпе туллин усă курмалла, халăхăн коммунальнăй хуçалăх тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлатмалла.

СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕнче строительство организацийĕсенче перекетлĕх режимне вăйлатма кирлине кăтартса паначчĕ, мĕншĕн тесен строительство организацийĕсен пысăк тухăçлă машинăсем пур, вĕсен ĕçе тĕрĕс организацилеме, строительство материалĕсем валли каякан расходсене чакарма, накладной расходсене пĕчĕклетме лайăх майсем пур.

Строительство ĕçĕсен планне тултарма тата ирттерсе тултарма, ĕçсен хакне йÿнетмелли задание пурнăçлама Чăваш АССР-ĕнчи тĕп строительство организацийĕн те—РСФСР гражданла строительство Министерствин «Чувашстрой» тресчĕн те—кирлĕ условисем пурте çителĕклĕ.

Çапах та «Чувашстрой» тресчĕ çав майсемпе усă кураймаи. Çак трестăн ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пур. 1952 çулта строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне тултарнă пулин те, çак ĕçсене планпа тума палăртнă тĕп объектсем тăрăх мар, планпа палăртман объектсем тăрăх тултарнă. Çапла, сăмахран, 36 хваттерлĕ çурт лартмалли плана 38,8 процент кăна тултарнă.

«Чувашстрой» тресчĕ машинăсемпе тата механизмсемпе япăх усă курнă. Грузтиесе пушатмалли ĕçсен 60 процентне план тăрăх механизмсемпе тумалла пулнă, тĕрĕссипе çав ĕçсене алăпа тунă. Çакă вăл ĕç тухăçлăхне ÿстерме пансăрленĕ, пĕр рабочи пусне тумалли ĕçсен планне тултарса çитереймен. Хуçасăрлăха пĕтермен, укçа-тенкĕ перекетлĕн расходламан. Çавна пула, строительствăпа монтаж ĕçĕсен хакне 379 пин тенкĕлĕх ÿстерсе янă, хуçасăрлăха пула 114 пин тенкĕ убыток тÿснĕ, вара çулталăк пуçланнă тĕле трестăн оборотри укçа-тенкĕ çаврăнăшĕнче 206 пин тенкĕ çитеймен.

Кăçалхи пĕрремĕш çурçуллăхра та «Чувашстрой» тресчĕ хăйĕн ĕçне çителĕксĕр урăхлатса çĕнетрĕ. Строительствăпа монтаж ĕçĕсен çур çулти планне 58.5 процент кăна тултарнă, строительство ĕçĕсен хакне 380 пин тенкĕлĕх ÿстерсе янă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ кăçалхи август уйăхĕнче трестăн 1953 çулхи пĕрремĕш çур çулти хуçалăх ĕçĕсене пăхса тухрĕ, пысăк ситменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă постановлени йышăнчĕ. «Чувашстрой» трест управляющийĕн Куприянов юлташăн Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă постановленине пурнăçламалла тата строительствăпа монтаж ĕçĕсен планне, вĕсен хакне йÿнетме панă задание пурнăçламалла.

Укçа-тенкĕ перекетлеме тата финанспа хуçалăх тĕлĕшĕнчи ĕçсене лайăхлатма республикăри машина-трактор станцийĕсен пысăк майсем пур. Сапах та çав майсемпе вĕсем çителĕксĕр усă курассĕ.

1952 çулта тракторпа тумалли ĕçсен планне 101,9 процент тултарнă пулин те,

(Юлашки 3-мĕш страницăра).

А. В. Сомов юлташ тунӑ доклад

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 2-мӗш страницӑра).

машина-трактор станцийӗсем плана колхозсемпе тунӑ договорсенче палӑртнӑ срокосенче пурнӑҫлаймаҫ, ҫавӑ вӑл колхозсенче ялхуҫалӑх ӗҫӗсене тӑвассине вӑраха янӑ, колхоз уй-хирӗсен тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн кӗрешес ӗҫре МТС-сен пӗлтерӗшне чакарнӑ.

Машина-трактор станцийӗсенче мӗнпур тракторсемпе, комбайнсемпе тата ытти механизмсемпе туллин усӑ курассишӗн кӗрешни ҫук. Тракторсемпе комбайнсем ӗҫлемесӗр нумай лараҫҫӗ. Техникӑлла кӑлтӑксене пула кӑна 1952 ҫулта тракторсем 52.491 смена ахаль ларнӑ, ҫакӑ вӑл тракторсемпе ӗҫленӗ сменӑсен 14 процентчӗ чухлӗ пулать. Трактор ӗҫӗсен хӑйне ларакан хакне 1,2 процент ӳстерсе янӑ. Горючи ытлашши сунтарнине, администрципе управлени аппаратне тытса тӑма ытлашши укҫа-тенкӗ пӗтернине тата тракторсене юсама ларакан хака ӳстернине пула, бюджетпа уйӑрса панинчен 447 пин тенкӗ ытлашши расходланӑ. Машина-трактор станцийӗсем хӑйсен финанс обязательствисене пурнӑҫлайман, вӗсем пирӗн республика бюджетне 531 пин тенкӗ парса ҫитереймерӗҫ.

Чӑваш АССР Ялхуҫалӑхӗпе хатӗрлев министерстви тракторсемпе усӑ курас тата машина-трактор станцийӗсене тытса тӑма каякан расходсене чакарас ыйтусем ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхас пулать.

Чӑваш АССР бюджетӗнчи тупӑшсенче суту-илӳ организацийӗсен тӳлевӗсем пысӑк вырӑн йышӑнаҫҫӗ. Вавӑн тӑвакан суту-илӳ ҫаврӑнӑшӗ ӳсӗмӗн ӳсӗмӗн ӳсе пырать. 1953 ҫулта пирӗн республикӑра вырӑнти торгсем енӗпе кӑна тавар ҫаврӑнӑшӗ 26,1 миллион тенкӗлӗх ӳсет, таварсен ассортиментчӗ нумайланать.

Ҫапах та суту-илӳ организацийӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Ҫав организацисем фондпа уйӑрса панӑ чухлӗ таварсем кӳрсе килеймен, ҫавна пула тавар ҫаврӑнӑш планне 4,5 процент тултарса ҫитереймен. Халӑха мӗн кирлине ялӑх пӗлеҫҫӗ, ассортимент минимумӗнче палӑртнӑ таварсем пулмаҫҫӗ. Кулленкирлӗ таварсем базӑсенче пулсан та, вӗсене сутас тӗлӗшпе чӑрмавсем пулаҫҫӗ. Шупашкар, Канаш тата республикӑри ытти хуласенче пахча ҫимӗҫсемпе ҫӗрулми сутас ӗҫе япӑх йӗркеленӗ. Ку вӑл суту-илӳ организацийӗсем ҫаврӑнӑҫуллӑ пулманнине тата вӗсем ӗҫсыннисен ыйтӑвӗсем ҫине сиелтен пӑхнине кӑтартса парать.

Финанс енӗпе витӗмлӗн тӗрӗслесе тӑман пирки хуҫалӑхпа сыхӑнса тӑман пысӑк расходсем тунӑ. Штрафсемпе пени тӳленине тата растратӑсене пула кӑна 796 пин тенкӗ пӗтнӗ, тавар ҫаврӑнӑшӗнчи тӑкаксем енӗпе 1.110 пин тенкӗ ытлашши расходланӑ.

Ҫак мӗнпур ҫитменлӗхсем акӑ мӗн патне илсе ҫитернӗ: Суту-илӳ министерстви предприятийӗсем тупӑш илмелли плана тултараймаҫ, бюджета 678 пин тенкӗ парса ҫитереймен.

Чӑваш АССР Суту-илӳ министрӗн Малыщев юлташӑн тавар ҫаврӑнӑш планне тултарассишӗн, суту-илӳ предприятийӗсен финанспа хуҫалӑх ӗҫӗсене лайӑхлатассишӗн, бюджет умӗнчи обязательствӑна пурнӑҫлассишӗн вырӑнсенчи суту-илӳ тӑвакан организацисен ответлӑхне ӳстермелле.

Партипе правительство кӑҫал халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине ӳстерес тӗлӗшпе чылай ӗҫсем туса иртерчӗҫ. ССР Союзӗн правительстви йышӑннипе килӗштерсе, пирӗн республика правительстви Чӑваш АССР-ӗнчи вырӑнти тата топливо промышленность предприятийӗсемпе Чӑвашпромсовета пӑхӑнса тӑракан промартельсем енӗпе халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине 19.145 пин тенкӗлӗх ӳстерме йышӑнчӗ. Правительство ҫирӗплетсе панӑ заданине пурнӑҫлама мӗн кирли республикӑри промышленноҫӑн пурте ҫителӗклӗ. Резервсемпе ытларах усӑ курни ҫеҫ кирлӗ.

Анчах ҫакна палӑртас пулать: республикӑри уйрӑм районсенче вырӑнти чӗртавартан таварсем туса кӑларасси ҫине тимлӗн пӑхмаҫҫӗ. Ҫавӑн пирки 1952 ҫулта вырӑнти промышленноҫпа промысла коопераци предприятийӗсем суту-илӳ организацийӗсене халӑха кирлӗ таварсем 15.302 пин тенкӗлӗх парса ҫитереймен. Вырӑнти тата топливо промышленность министерствине пӑхӑнса тӑракан предприятисем 1953 ҫулхи пӗрремӗш сур ҫулта плампа палӑртнӑ 33 йышши тавартан 8 йышши тавар енӗпе кӑна плана тултарнӑ, промысла коопераци артелӗсем вара 41 йышши тавартан плана 17 йышши тавар енӗпе кӑна тултарнӑ. Продукци туса кӑлармалли сур ҫулхи плана Пӑрачкаври, Елчӗкри, Вӑрмарти райпромкомбинатсем уйрӑмах япӑх пурнӑҫланӑ. Сӗнтӗр районӗнче ҫичӗ промартельтен улттӑшӗ, Первомайски районӗнче — пилӗк промартельтен тӑваттӑшӗ, Куславкка районӗнче тӑватӑ промартельтен виҫҫӗшӗ, Пӑрачкав районӗнче пилӗк промартельтен тӑваттӑшӗ плана тултарман.

Халӑха кирлӗ таварсем ытларах туса кӑларас тата бюджета пухӑнмалли укҫатенке пӗтӗмпех пухса ҫитермелле тӑвас тесе райсоветсемпе хула Совечӗсен исполкомӗсен хамӑр республикӑн правительстви вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗ енӗпе продукци туса кӑларассине ӳстерме йышӑннине пӗтӗмпех пурнӑҫламалла, халӑхӑн йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерекен предприятисем ӗҫне ытларах ҫавӑрса пӑхмалла.

«ССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ продукци пахалӑхне лайӑхлатма кирлине уйрӑмах палӑртрӗ. Халӑха кирлӗ таварсем туса кӑлармалли пысӑк майсене малашнехи план синчен каласа, Г. М. Маленков юлташ ҫакна палӑртрӗ: «Анчах, апла пулин те, халӑха кирлӗ таварсем туса кӑларассине хисеп енӗпе кӑна ӳстернипе ҫырӑнса тӑма юрамасть. Халӑха кирлӗ мӗнпур промышленность таварӗсен пахалӑхне лайӑхлатас ыйту пысӑк вырӑн йышӑнать».

Г. М. Маленков юлташ ССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗнче калани Чӑваш республикинчи промышленность предприятийӗсемпе коопераци артелӗсене те цырса тивет. Пирӗн промышленность предприятийӗсемпе коопераци артелӗсем лайӑх продукци туса кӑларассишӗн кирлӗ пек кӗрешмеҫҫӗ-ха. Фабрика маркин чыссӑшӗн Улатӑрти атӑ-пушмак фабрики япӑх кӗрешет. Ҫак фабрика туса кӑларакан атӑ-пушмак ӗҫсыннисен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене тивӗҫтерейместь. Улатӑрти атӑ-пушмак фабрики коллективӗн чыслӑ задачи атӑ-пушмак пахалӑхне кӗске вӑхӑт хушшинче лайӑхлатасси пулать. Туса кӑларакан атӑ-пушмак ҫирӗп, илемлӗ пултӑр, ӗҫсыннисен кӑмӑлне кайтӑр.

Пирӗн республикӑри апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗ туса кӑларакан продукцин пахалӑхӗ те ҫителӗксӗр. Шупашкарти кондитерски фабрика тата хӑшпӗр районсенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсем туса кӑларакан конфетсемпе прянӗксен пахалӑхӗ стандарта ларместь.

Продукци пахалӑхне лайӑхлатмалли условисем пирӗн ҫителӗклӗ, ӑна малта пыракан райпромкомбинатсемпе промысла артелӗсен опычӗнчен курма пулать. Сӑмахран, ҫ. Сӗмӗрлери райпромкомбинат юлашки вӑхӑтра паха сӗтел-пукан ытлара туса кӑларма тытӑннӑ. Вӑл туса кӑларакан сӗтел-пукан ҫирӗп, илемлӗ, ӑна илекенсем нумай. Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркассинчи райпромкомбинат та паха сӗтел-пукан туса кӑларать. Задача ҫавӑн пек: паха продукци туса кӑларас тӗлӗшпе пухнӑ опытпа вырӑнти промышленноҫпа промысла коопераци артелӗсене пурне те паллаштармалла.

Маларах каланине ҫакна палӑртмалла: Чӑваш АССР бюджетӗнчи укҫа-тенкӗн пысӑк пайӗ социально-культурӑлла ӗҫсем валли каять, ҫавӑнпа ку укҫа-тенкӗпе уйрӑмах пӗлсе, тӗрӗс усӑ курмалла тӑвас пулать.

Сутӑҫ пайӗсемпе сывлӑх пайӗсем тӗрӗслесе тӑманнине пула, сутӑҫ тата халӑх сывлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен хӑшпӗр учрежденисенче государство укҫа-тенкине тӗрӗс мар расходласҫӗ, хӑшпӗр чухне вӑсерен тухса укҫа пӗтереҫҫӗ тата кирек ӗҫсем тӑваҫҫӗ. 1952 ҫулта республикӑри финанс органӗсем сутӑҫ учрежденийӗсенче 429 пин тенкӗ, халӑх сывлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен учрежденисенче 216 пин тенкӗ вырӑнсӑр пӗтернине палӑртнӑ. Ҫавӑн евӗрлӗ тӗслӗхсем кӑҫал та пулнӑ. 1953 ҫулхи ултӑ уйӑх хушшинче сутӑҫ учрежденийӗсенче 183 пин тенкӗ, халӑх сывлӑхне сыхлас тӗлӗшпе ӗҫлекен учрежденисенче 192 пин тенкӗ укҫа тӗрӗс мар расходланӑ.

Сутӑҫ министрӗн Токарев юлташӑн, Сывлӑх министрӗн Ефимова юлташӑн тата ӗҫсыннин депутачӗсен районсемпе хуласенчи Совечӗсен исполнительнӑй комитечӗсен малашне бюджетран уйӑрса паракан укҫа-тенкӗпе тӗрӗс тата перекетлӗ усӑ курмалла тӑвас пулать.

Хӑшпӗр министерствӑсемпе управленисене тата вӗсен вырӑнти органӗсене кӑҫал сӗнӗлле йӗркелени бюджетри укҫатенке чылай перекетлеме май пачӗ. 1953 ҫулта управлени органӗсене тытса тӑма, пӗлтӗрхипе танлаштарсан, 3.781 пин тенкӗ сахалтарах уйӑрса пама палӑртнӑ. Анчах ҫакна палӑртас пулать: управлени аппаратне тытса тӑрас енӗпе финанс дисциплинине пӑснӑ тата укҫа-тенкӗ ытлашши тӑккаланӑ тӗслӗхсем халӗ те пур.

Перекетлӗх режимне ҫирӗп тытса пыма министерствӑсемпе ведомствӑсен тата вырӑнти Советсен исполнительнӑй комитечӗсен хӑйсене пӑхӑнса тӑракан предприятисемпе учрежденисене финанс тӗлӗшӗнчен ытларах тӗрӗслесе тӑмалла.

Хуҫалӑх планӗсене пурнӑҫлассишӗн кӗрешес, перекетлӗх режимне пурнӑҫлас, предприятисемпе организацисем бюджета укҫа-тенкӗ пӗтӗмпех тата вӑхӑтра тӳлемелле тӑвас тӗлӗшпе финанс органӗсем умӗнче пысӑк та ответлӑ задачӑсем тӑраҫҫӗ. Ӗнӗ ҫакна йышӑнатӑп; Чӑваш АССР Финанс министерстви тата унӑн вырӑнти органӗсем хӑйсем умӗнче тӑракан задачӑсене ҫителӗксӗр пурнӑҫласа пыраҫҫӗ-ха, республикӑри финанс органӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха.

Финанс органӗсем халӑх хуҫалӑхӗн тӗрлӗ отраслӗсен тата предприятисен экономикине япӑх сӑнаса вӗренеҫҫӗ. вӗсен ӗҫне сахал тӗрӗслеҫҫӗ, бухгалтери отчечӗсемпе балансӗсене кирлӗ пек тишкӗрмеҫҫӗ. Пурлӑхпа укҫа-тенке тӗрӗс мар салатса пӗтернӗ тӗслӗхсене тата халӑх хуҫалӑхӗнчи резервсене хӑшпӗр чухне сийӗнчех палӑртмаҫҫӗ, чылай чухне финанс органӗсем финанс дисциплинине пӑсакансене ҫирӗп ответ тыттармаҫҫӗ.

Финанс органӗсен хӑйсен ӗҫ меслетне ҫӗнетсе лайӑхлатмалла, предприятисемпе организацисен хуҫалӑхпа финанс ӗҫне, перекетлӗх режимне пурнӑҫланине, ҫавӑн пекех предприятисемпе организацисем пурте хӑйсен бюджет умӗнчи обязательстисене пӗтӗмпех тата вӑхӑтра пурнӑҫласа пынине тӗрӗслесе тӑрас ӗҫе вӑйлатмалла.

Депутат юлташсем! Сире каласа панӑ Чӑваш АССР-ӗн 1953 ҫулхи бюджечӗ хамӑр республика умӗнче тӑракан пилӗ пысӑк задачӑсене пӗтӗмпех пурнӑҫлама май парать. Ҫав бюджетра республикӑри ӗҫсыннисен пурнӑҫне малалла ӳстерме, культурине ҫӗкӗлтме укҫа-тенкӗ ҫителӗклӗ уйӑрса пама палӑртнӑ.

Пӗр иккӗленмелли те ҫук, Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тачӑ пӗтӗҫнӗ чӑваш халӑхӗ, Тӑван ҫӗршыври мӗнпур ӗҫсыннисем пекех, 1953 ҫулхи халӑх хуҫалӑх планӗпе государство бюджетне ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлама мӗн кирлине пурне те тӑвӗ, ҫапла вара хамӑр ҫӗршывра коммунизм тӑвас ӗҫе хӑйӗн вӑйне хурӗ (Алӑ ҫупаҫҫӗ).

Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Чӑваш республикинчи комитетӑн пленумӗ

Сентябрӗн 5-мӗшӗнче Шупашкарта, Советсен ҫуртӗнче, Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Чӑваш республикинчи комитетӑн пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум ӗҫне хутшӑнма парти, совет, профсоюз, комсомол организацийӗсен тата ӗҫсынни общественсен представителӗсем республикӑри пур районсенчен те килнӗ. Пленума наукӑпа культура работникӗсем, промышленность предприятийӗсемпе ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансем, миршӗн кӗрешес ӗҫе хастарлӑ хутшӑнакан ҫынсем пухӑннӑ.

Кӗскен каласа, пленума Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен республикӑри комитет членӗ Ягоднина юлташ уҫрӗ.

Пленум кун йӗркинче пӗр ыйту пулчӗ, вӑл—Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен республикӑри комитетӑн Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн тата мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗн пленумӗн решенийӗсемпе сыхӑнса тӑракан задачисен ҫинчен сӳтсе явасси. Ку ыйту тӑрӑх Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Чӑваш обкомӗн секретарӗ С. М. Ислюков юлташ доклад туса пачӗ.

— Нумай вӑхӑтлӑха ҫирӗп мир туса хурассишӗн кӗрешни,—терӗ доклад пуҫламӑшӗнче Ислюков юлташ,—сӗр ҫинче пурӑнакан мӗнпур халӑхсемшӗн кирлӗ. Мир ӗҫӗ халӑхсен алпинче пулнине пурнӑҫри опыт пиҫӗ уҫӑмлӑн кӑтартса парать. Ҫавӑнпа ӗнтӗ халӑх массисем миршӗн кӗрешес ӗҫе хастарлӑ хутшӑнса пыраҫҫӗ.

Хӑйсен ҫӗршывӗсенчи тата урӑх ҫӗршывсенчи халӑхсене саратнипе пысӑк услам илессишӗн хыпӑнакан империалистсемпе вӗсен агенчӗсене ҫеҫ вӑрҫӑ кирлӗ.

Миршӗн тӑракансен хальхи юхӑмӗ ниҫкӗмӗш тӗнче вӑрҫи хыҫӗн пуҫланса кайрӗ те, пысӑк ситӗнӳсем турӗ. Ку вӑл ырӑ шухӑшлӑ ҫынсене империалистла государствӑсен агрессилле ӗҫӗсене хирӗҫ кӗрешессине вӑйлатса яма хавхалантарать. Миршӗн кӗрешекенсен тӗнчери фронтне ертсе пыракан вӑйӗ — пирӗн аслӑ Совет Союзӗ, халӑх Китайӗ, социализмла лагерьти ытти ҫӗршывсем пулса тӑраҫҫӗ. Вӗсем атемлӗхӗн виҫӗ пайӗнчен пӗр пайне—800 миллион ҫынна пӗтӗҫтерсе тӑраҫҫӗ. Совет халӑхӗ миршӗн тӑрать, уншӑн чун-чӗререн кӗрешет, мире хӳтӗлеме пулӑшакан кирек мӗнле пуҫарӑва та пулӑшса пырать, ҫав вӑхӑтрах социализмла Тӑван ҫӗршывӑн оборонине ҫирӗплетме кирлине те манмасть.

Ҫавӑнпа та пирӗн халӑх Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештри сессийӗн тата Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗн пленумӗн решенийӗсене чӗререн ырлать тата ҫав решенисем майлӑ тӑрать.

Малалла докладчик иртнӗ ҫулхи декабрьте Австрин тӗп хулинче—Венӑра халӑхсен мире хӳтӗлес тӗлӗшпе пулса иртнӗ Пӗтӗм тӗнчери конгресӗн, Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештри сессийӗн ӗҫӗсем ҫинчен, тӗнчери нумай ҫӗршывсенче миршӗн тӑракансен кӗрешӗвӗпе ҫав кӗрешӳн ӑнӑҫлӑхӗсем ҫинчен, тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене ҫӗршывсем хушшинче калаҫу иртттернипе татса парас тӗлӗшпе Совет Союзӗ тунӑ мирлӗ пуҫару ҫинчен тӗплӗн каласа парать.

— Совет правительствин документӗсенче,—тет вӑл,—тӗнчери ыйтусене татса памалли лайӑх сӗнӳсем кӑларса тӑратнӑ, ҫав сӗнӳсем мӗнпур ҫӗршывсенчи халӑхсен пурнӑҫ интересӗсемпе килӗшсе тӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа ку сӗнӳсене пур халӑхсем те ырлаҫҫӗ.

Тӗнчере юлашки вӑхӑтра пулса иртнӗ ӗҫсем тавлашуллӑ ыйтусене калаҫусем иртттернипе татса парас шухӑш майлӑ тӑракансем сумне миллионшар ҫын ҫӗнӗрен хутшӑннине кӑтартса пареҫҫӗ. Ҫак ӗҫсем халӑхсене тӗнчери лару-тӑру ҫинчӗнлесе ҫитнине вӑйсӑрлатма, ырӑ шухӑшлӑ ҫынсем пурте кӗтнӗ, ӗмӗтленнӗ мире вӗсем хӑйсен вӑйӗпе ҫӗнсе илме пултарнине кӑтартса пареҫҫӗ.

Ислюков юлташ хӑйӗн докладӗнче Коммунистсен партийӗпе Совет правительствин тулашри политики, Совет Союзӗ пӗтӗм тӗнчери миршӗн кӗрешни, ССР Союзӗпе халӑх демократи ҫӗршывӗсем хушшинчи туслӑха, пӗр-пӗрне тӑванла пулӑшса ӗҫленине аталантарни, кӳршӗри государствӑсемпе пурнипе те килӗшӳллӗ пурӑнассине лайӑхлатни, партипе правительствӑн халӑхӑн пурнӑҫне лайӑхлатмалли шалти политики ҫинчен тӗплӗн каласа пачӗ. Ҫавӑн пекех докладчик СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсем, сессире СССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Г. М. Маленков юлташ каланӑ сӑмах, Германи ыйтӑвӗ пирки кӑҫалхи августӑн 15-мӗшӗнче Совет правительстви панӑ нота, Совет правительствипе Демократиллӗ Германи Республикин правительство делегацийӗ хушшинче Мускавра пулса иртнӗ калаҫусем ҫинчен тӗплӗн каларӗ.

— Мир ӗҫӗшӗн тимлӗн кӗрешнипе пӗрлех,—асӑрхаттарать докладчик, — аслӑ Совет Союзӗн оборонине ырми-канми тӗреклетсе пырас тӗлӗшпе хамӑрӑн таса тивӗҫе ҫирӗп асра тытас пулать. Кам та пулин ӗҫран тухса пирӗн ҫӗршыв ҫине тапӑнасран сыхланма хатӗр тӑрас пулать. Тӗрлӗрен авантюристсемпе вӑрҫӑ провокаторӗсен вӗрилӗнсе кайнӑ пуҫӗсене тӑна кӗртме тата Совет Союзӗнчи социализм тунӑ ҫӗнтерӳсене, Совет Союзӗн хӑватне хисеплеме вӗрентме совет ҫыннисен кирек хӑҫан та хатӗр пулмалла.

Совет государстви хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсем мире сыхлаҫҫӗ. вӗсем никама та хӑратмаҫҫӗ. Атом хӗҫпӑшалӗпе водородлӑ бомба пирки те ӗҫ ҫавнашкалах. Ку хӗҫпӑшалсене туса хатӗрлеме хамӑр ҫеҫ пӗлетпӗр тесе США империалисчӗсем миршӗн тӑракан халӑхсене хӑратма пӑхнӑ, халӗ ӗнтӗ вӗсем ҫавӑн пек хӑратаймаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл мире юратакан вӑйсем ҫӗнӗ ҫӗнтерӳ тунине пӗлтерет.

Пленума пухӑннисене Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗн пленумӗ тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене калаҫусем иртттернипе мирлӗ майпа татса парассишӗн пысӑк кампани сарса яма йышӑнни ҫинчен пӗлтерсе, Ислюков юлташ ҫапла калать:

— Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗ хӑй ҫакна ҫирӗппӗн шанса тӑнине кӑтартса пачӗ: Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ чӗнсе каланине мӗнпур совет ҫыннисем чӗререн ырласа йышӑнӗҫ, тӗнчери ыйтусене мирлӗн татса парассишӗн пыракан юхӑма активлӑн хутшӑнса, хӑйсем яланах миршӗн тӑнине пӗтӗм тӗнче умӗнче ҫӗнӗ вӑйпа кӑтартса парӗҫ, мир политикине ҫирӗп тытса пыракан Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫӗҫ.

Тӗнчери хальхи лару-тӑру ҫинчен тата халӑхсем хушшинче мир туса хумалли ҫулсем ҫинчен ӗҫсыннисен анлӑ массисене ӑнлантарса парасси пирӗн пӗрремӗш тивӗҫ пулать.

Аслӑ Ленин пире ҫапла вӗрентнӗ: «Государство массӑсен ӑнланулӑхӗпе вӑйлӑ. Массӑсем пурин ҫинчен те пӗлеҫҫӗ, пурин ҫинчен те шутлама пултараҫҫӗ тата пурне те ӑнланулла тӑваҫҫӗ пулсан, государство вӑйлӑ пулать». Ҫак кӑтартӑва асра тытса, эпир ӗҫсыннисене Совет правительстви тулашри политика тӗлӗшпе тӑвакан ӗҫсемпе вӗсен пӗлтерӗшӗ ҫинчен ӑнлантарса пама тивӗҫ. Совет государствин кашни гражданинӗ ҫав ӗҫсене пӗлсе тӑма, вӗсене ӑнланулӑн хаклама пултартӑр.

Совет халӑхӗ кампани вӑхӑтӗнче хӑйӗн хӑватлӑ сассине миршӗн кӗрешекенсен сассипе пӗрлештерет. Ҫав сасӑ тӗнчери мӗнпур вырӑнсенчен илтӗнет.

Кампани задачи вӑрҫӑ чӗртекенсем тӗлӗшпе халӑхсен сыхӑлӑхне ӳстересси пулать. Вӑрҫӑ чӗртекенсем ҫӑпланмаҫҫӗ, халӑх массине сӳпса пӑтраштарас тӗлӗшпе тӗрлӗ майсемпе усӑ кураҫҫӗ. Агрессиллӗ вӑйсен провокацийӗсене, вӗсем ӑҫта тата хӑш вӑхӑтра палӑрнине пӑхмасӑр, вӑхӑтра тӑрӑ шыв ҫине кӑларас пулать.

Мир ӗҫне тӗреклетес тени пирӗн Тӑван ҫӗршывӑн обществӑлла пуянлӑхне ӳстерессине тата социализмла государствӑн оборона пултарулӑхне ҫирӗплетессине пӗлтерет, — ҫапла кашни совет ҫыннин уҫӑмлӑн пӗлсе тӑмалла. Промышленноҫпа ялхуҫалӑхӗнче государство планӗсемпе заданийӗсене иртерсе тултарассишӗн, халӑх пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн тата ӗҫсыннисен культурӑпа йӑла ыйтӑвӗсене тивӗҫтерессишӗн социализмла ӑмӑрту анлӑн сарса пымалла. Пирӗн халӗ юлса пыракан ӗҫ участокӗсем те сахал мар-ха, ӗҫе пур енӗпе те татӑклӑнах лайӑхлатас пулать.

Миршӗн кӗрешесси — пӗтӗм халӑх ӗҫӗ. Ҫавӑнпа та тӗнчери ыйтусене мирлӗ майпа татса парассишӗн пыракан кампание обществӑлла организацисем, культура тата наука обществисем активлӑ хутшӑнма тивӗҫ.

Нимӗн иккӗленмелли те ҫук, Совет Чӑваш республикинчи ӗҫсыннисем, пӗтӗм совет халӑхӗ пекех, Совет правительствин мире юратакан политикине пӗр ҫын пек пулса ырлӗҫ тата тӗнчери ыйтусене мирлӗн татса парассишӗн пыракан юхӑма ӗҫри ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе паллӑ тӑвӗҫ.

Пӗтӗм тӗнчери миллионшар ҫынсем, — тет докладчик юлашкинчен,—пирӗн ҫине, социализмлӑ аслӑ держава ҫине, пӗтӗм тӗнчери миршӗн шанчӑклӑн тата ҫирӗппӗн кӗрешекен ҫӗршыв ҫине пӑхаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен речӗсене тачӑрах пӗтӗҫтереҫҫӗ. Миршӗн активлӑ кӗрешекенсен шучӗ кунсерен ӳссе пырать. Мирӗн тӗрӗслӗхлӗ ӗҫӗшӗн кӗрешекенсен хӑватлӑ фрончӗ вӑрҫӑ вӑйӗсене каялла чакаратех!

Ислюков юлташ докладӗ тӑрӑх пренире 14 ҫын тухса каларӗ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештри сессийӗ йышӑннӑ решенисен пысӑк пӗлтерӗшне палӑртса, Облпрофсовет председателӗ Романова юлташ ҫапла калать:

— Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештри сессийӗ йышӑннӑ решенисене пӗтӗм рабочи класс, пӗтӗм ҫӗршывсенчи малта пыракан ҫынсем ырларӗҫ. Ҫакна ӑнланмалла ӗнтӗ, мӗншӗн тесен сессе мӗнпур ҫӗршывсен пурнӑҫӗнчи тӗп ыйтӑва—мирпе халӑхсен хӑрушсӑрлӑхӗ ҫинчен, тӗнчери лару-тӑрури йывӑрлӑха ҫӑмӑллатасси ҫинчен сӳтсе явнӑ. Вӑрҫӑпа мир ҫинчен тӑракан ыйту ҫине мӗнпур ҫӗршывсенчи халӑхсен чи анлӑ сийӗсем тимлӗ пӑхаҫҫӗ, халӗ обществӑлла пурнӑҫра унтан ытларах интереслентерекен ыйту урӑх ҫук. Капитализмла ҫӗршывсенчи рабочисен пурнӑҫӗнчен илнӗ нумай тӗслӗхсемпе оратор унти ӗҫсыннисен пурнӑҫӗ йывӑррине кӑтартса парать. Вӑрҫӑ расходӗсене пула тата ӗҫ тупӑнманнине пула ӗҫсыннисем ҫав тери тертленсе пурӑнаҫҫӗ. США-ра, Англире, Японире, Хӗвеланӑҫ Германире тата Францире ӗҫсӗррисем 32 миллион ҫын ытла. Ӗҫ укҫине нумай чакарнӑ.

Политикӑлла правасем ҫукки, рабочи класа эксплуатацилесси вӑйланни хирӗҫӳсене сивӗчлетеҫҫӗ, халӑх массисен кӑмӑлсӑрлӑхне ӳстереҫҫӗ.

Романова юлташ рабочи класс хӑйӗн тӗп интересӗсемшӗн, демократилле ситӗнӳсемшӗн кӗрешни ҫинчен, пурнӑҫ шайне чакарнине тата ҫӗнӗ вӑрҫа хатӗрленмелли политикӑна хирӗҫ кӗрешни ҫинчен калать.

Оратор СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ йышӑннӑ решенисем ҫинчен, Совет правительствин пуҫлӑхӗ Г. М. Маленков юлташ сессире туса каланӑ сӑмах ҫинчен, Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗн пленумӗ йышӑннӑ решенисен пысӑк пӗлтерӗшӗ ҫинчен, хальхи тапхӑрта профсоюз организацийӗсем умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен калать.

Чӑваш совет писателӗсен правленийӗн председателӗ Шумилов юлташ ҫапла пӗлтерчӗ: Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештри сессийӗ тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене калаҫусем иртттернипе татса парассишӗн кампани пуҫласси ҫинчен решени йышӑннине пирӗн республикӑри литература работникӗсем, пӗтӗм чӑваш халӑхӗпе пӗрле, хӗрӳллӗн ырларӗҫ.

Республикӑри ӗҫсыннисене социализмла Тӑван ҫӗршыва, тӑван Коммунистсен партийӗпе Совет правительствине юратма, халӑхсен туслӑхӗпе пролетарилле интернационализм майлӑ, мӗнпур ҫӗршывсенчи ӗҫсыннисемпе туслӑ пурӑнма воспитани парас тӗлӗшпе Чӑваш республикинчи литераторсем хӑйсен творчествипе пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ. Коммунизм тӑвакан совет ҫыннисен мирлӗ ӗҫна пирӗн писательсемпе поэтсем хӑйсен произведенийӗсенче мухтаҫҫӗ, миршӗн тата халӑхсем хушшинчи туслӑхшӑн тӑраҫҫӗ, вӑрҫӑ чӗртекенсен этеме курайман идейисене тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ.

Халӑхсен туслӑхӗн идейисене пропагандӑлас ӗҫре аслӑ классиксемпе совет литератури тата Совет Союзӗнчи тӑванла халӑхсен литератури произведенийӗсене чӑвашла куҫарни пысӑк вырӑн йышӑнать. Халӑх демократи ҫӗршывӗсенчи писательсен, Китай, Корея писателӗсен произведенийӗсене эпир чӑвашла куҫаратпӑр.

Ҫавӑнпа пӗрлех Америкӑри, Англири, Францири, Италири, Германири, Бельгири, Данири, Грецири тата ытти ҫӗршывсенчи прогрессивлӑ писательсен произведенийӗсемпе чӑваш халӑхне паллаштарас тӗлӗшпе те чӑваш писателӗсем сахал мар ӗҫлеҫҫӗ.

Пирӗн халӑх, Совет Союзӗнчи пӗтӗм халӑхсем пекех, мӗнпур ҫӗршывсенчи халӑхсемпе экономикӑпа культура енӗпе ҫыхӑну тытассине сарса пыма тӑрӑшать.

Совет ҫыннисем миршӗн вӑрҫа хирӗҫ тӑнӑ, халӗ те ҫавӑн пекех. Вӗсем тӗнчери ӗҫсене тимлӗн асӑрхаса тӑраҫҫӗ. Нумай пулмасть эпӗ Сӗнтӗр районӗнчи «Новая Юнга» колхоз членӗсен пухӑвӗнче пултӑм. Ҫав пухура ватӑ колхозник Иван Григорьевич Фролов, США правительстви ҫӗнӗ тӗвче вӑрҫи хатӗрлеме мӗн чухлӗ укҫатенкӗ расход тума палӑртса хуни ҫинчен калакан цифрӑсене илсе кӑтартса, ҫапла каларӗ: «Эпир ку цифрӑсене лайӑх ӑстуса юлӑпӑр. Анчах Америкӑри тата ытти агрессорсем пире вӑйсӑр тесе ан шутлаччӑр. Чӑваш колхозникӗсем, пӗтӗм совет ҫыннисемпе пӗрле, совет ҫӗршывӗн экономикӑлла хӑватне тата ытларах вӑйлатма вӑя шеллемесӗр ӗҫлӗҫ. Калаҫусем иртерни—пур тавлашуллӑ ыйтусене те татса памалли чи лайӑх меслет. Совет правительствин мирлӗ политикине эпир пурте пӗр шухӑшлӑ пулса чӗререн ырлатпӑр».

Фролов колхозникӑн сӑмахӗсем пӗтӗм чӑваш халӑхӗ миршӗн тӑнине кӑтартса параҫҫӗ.

— Совет правительствипе Коммунистсен партийӗн мирлӗ политикине,—тет Сӗмӗрлери сӗтел-пукан тӑвакан комбинатри ҫамрӑксен бригадин бригадирӗ Мытиков юлташ, — пирӗн комбинатра ӗҫлекенсен коллективӗ пӗтӗм чӗререн ырлать. Мир вӑл коммунизм тӑвакан совет халӑхӗн ҫавӑнӑҫлӑ ӗҫӗ. Пирӗн умра пӗр задача тӑрать, вӑл—пирӗн ӗҫри ҫитӗнӳсене тата ытларах нумайлатасси, халӑхӑн пурнӑҫне чечеклентерме кирлӗ продукцие нумай туса кӑларасси.

Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн вӑя шеллемесӗр ӗҫлекен, мире ӗҫпе ҫирӗплетекен стахановецсен йышӗ комбинатра куллен ӳссе пырать. Кӑҫалхи 7 уйӑх хушшинче комбинатри 533 рабочи ҫулталӑкри нормӑна 1—2 хут тултарнӑ. Ӗҫ нормине комбинатри рабочисем вӑтам шутпа 159,8 процент тултарса пынӑ.

Стахановла мир вахтине тӑрса, эпӗ кӑҫалхи 7 уйӑх хушшинче ҫулталӑкри нормӑна 2,3 хут иртерсе тултартӑм.

Эпир тунӑ ситӗнӳсемпе ҫӑпланса лармастпӑр, мӗншӗн тесен пурте ҫакна лайӑх пӗлсе тӑратпӑр: миршӗн кӗрешесси Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн тата хастарлӑнрах ӗҫлемеллине, унӑн тӗрекне тата ытларах ҫирӗплетмеллине пӗлтерет.

Халӗ ҫакна пурте йышӑнаҫҫӗ: тӗнчери миллионшар ҫынсем миршӗн тӑни никам ҫӗнеймн вӑй пулса тӑчӗ, ҫак вӑя агрессорсем хӑйсем те шута илмесӗр тӑма пултараймаҫҫӗ.

Совет ҫыннисем тата мире юратакан пур халӑхсем те, — тет юлашкинчен Мытиков юлташ,—Г. М. Маленков юлташ США водородлӑ бомба туса кӑларас ӗҫре монополист пулса тӑманни ҫинчен пӗлтернине туллн кӑмӑлпа кӗтсе илчӗҫ. Мир лагерӗн ситӗнӗвӗсем пире миршӗн ҫӗнӗ хӑватпа кӗрешме хавхалантараҫҫӗ. Эпир, рабочисем, ҫак таса ӗҫшӗн—мир ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешес ӗҫре вӑя шеллесе тӑмӑпӑр.

Биологи наукисен докторӗ, Чӑваш ялхуҫалӑх институчӗн профессорӗ Илетнев юлташ тӗнчери халӑхсем хушшинчи культура ыйтӑвӗсем тӑрӑх анлӑ ҫыхӑну тытас ӗҫе йӗркелеме кирли синчен калать. Ҫынсем пӗр-пӗрин ӗҫӗн результачӗпе, наука, техника тата искусство ситӗнӗвӗсемпе паллашма пултарччӑр. Пур халӑхсен культурине те ӑнӑҫлӑн аталантарма кирлӗ ҫак ҫыхӑну пӗр-пӗрне ӑнланмасӑр тата шанмасӑр пурӑнассине пӗтерме, кашни ҫӗршывӑн ситӗнӗвӗсемпе паллашма, ҫапла майпа тӗнчери лару-тӑрури йывӑрлӑха пӗтерме май парать.

— Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен республикӑри комитетӑн ҫак пленумне эпӗ,—тет КПСС Улатӑр хула комитечӗн секретарӗ Чистопольский юлташ,—Чӑваш республикинчи Улатӑр хулинчи ӗҫсыннисен ячӗпе калама килтӗм. Пирӗн ӗҫсыннисен кулленхи пурнӑҫӗпе ӗҫне пӑхсан социализмла системӑн вӑйӗ ҫӑлкуҫ пекех таса тӑни, халӑх миршӗн тӑрӑшни курӑнать. Хулари промышленность предприятийӗсем 1953 ҫулхи 8 уйӑх хушшинче плана 105 процент тултарчӗҫ, иртнӗ ҫулхи ҫав тапхӑрпа танлаштарсан, ҫӗршыва 8,5 миллион тенкӗлӗх ытларах продукци пачӗҫ. Халӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗ йышӑннӑ решенисемпе хавхаланса, предприятисен коллективӗсем ҫулталӑкри плана срокчен тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ йышӑннӑ решенисене ырласа, Совет правительствин мирлӗ политикине ырласа, эпир, совет ҫыннисем, коммунизм строительствин пур участокӗсенче те хӑватлӑ ӗҫлесе мире тӗреклетсе пымалла.

Пленум участникӗсем ача амӑшӗ-героиня Филиппова каланине пысӑк тимлӗхпе итлерӗҫ. Вӑл ҫапла каларӗ:

— Хаклӑ тусем! Телейлӗ ҫын хӑй телейлӗ пулнине асӑрхамасть, теҫҫӗ. Ку тӗрӗс мар. Совет ҫынни хамӑрӑн пурнӑҫри телее кашни утӑмра курса тата туйса тӑрать. Сирӗн умра ача амӑшӗ-героиня тӑрать, ман пек хӗрарӑмсем пирӗн ҫӗршывра нумай. Эпӗ 74 ҫулта, ҫамрӑк чухнехи ҫулсем патша влаҫӗ вӑхӑтӗнче иртрӗҫ, вӗсене эпӗ ылханса аса илетӗп.

Манӑн ачамсем телейлӗ, вӗсем ман пек асаппа хурлӑх тӳссе курман. Манӑн ачасенчен ҫурри ытла совет шкулӗсенче вӗреннӗ.

Нихӑш халӑх хӗрарӑмӗсем те хӑйсен ачисене чуралӑха парасшӑн мар. Мир ҫинчен калани чухне эпир вӑрҫа аса илетпӗр. Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑра манӑн пилӗк ывӑлӑмпа пӗр хӗр пулчӗҫ, вӗсенчен иккӗшӗ таврӑнаймарӗҫ. Эпӗ ҫакна хӑҫан та пулин манма пултарӑп-ши вара? Мир хӑй тӗллӗн килмест, мир пултӑр тесе кашнин харпӑр хӑй вырӑнӗнче лайӑхрах ӗҫлес пулать.

— Пирӗн республикӑри ҫамрӑксем, — терӗ ВЛКСМ обкомӗн секретарӗ Андреева юлташ,—ҫӗршыври мӗнпур ҫамрӑксемпе пӗрле, Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештри сессийӗ тата Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗн пленумӗ йышӑннӑ решенисене хӗрӳллӗн ырлаҫҫӗ. Мӗнпур халӑхсен прависене хисеплеме воспитани илнӗ совет ҫамрӑкӗсем ҫакна хӗрӳллӗн ӗненеҫҫӗ: калаҫусем иртерни тӗнчери хутшӑнусенчи йывӑрлӑха ҫӑмӑллатмалли пӗртен-пӗр тӗрӗс ҫул пулса тӑрать. Тӗнчери хутшӑнусенчи йывӑрлӑхсем мир ӗҫне, ҫамрӑк ӑру пурнӑҫне хӑрушлӑх умне кӑларса тӑратаҫҫӗ.

Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗн Будапештри сессийӗ тата Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗн пленумӗ йышӑннӑ решенисем ҫине пирӗн республикӑри ҫамрӑк рабочисемпе колхозниксем ӗҫри ҫӗнӗ ҫӗкленӳпе ответлеҫҫӗ, вӗсем пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхӑн виҫҫӗмӗш ҫулӗнчи плана срокчен тултарма, ҫапла майпа пӗтӗм тӗнчери мире тӗреклетес ӗҫе хӑйсен вӑйне хума пулаҫҫӗ.

РСФСР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ, Комсомольски районӗнчи Калинин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ Иванова юлташ Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн, мир ҫӗнтерӗвӗшӗн ялхуҫалӑх ӗҫченӗсем тӑрӑшса ӗҫлени ҫинчен каласа пачӗ.

Пирӗн колхозниксем, — терӗ вӑл, — Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ тавлашуллӑ ыйтусене калаҫусем иртттернипе татса пама йышӑннине пӗтӗм чӗререн саламлаҫҫӗ. Вӗсем Совет правительствипе пирӗн тӑван партин тулашри политикине пӗр шухӑшлӑ пулса ырлаҫҫӗ, хӑйсен хӗрӳллӗ ӗҫӗпе мир ӗҫне тӗреклетеҫҫӗ.

СССР Верховнӑй Совечӗн пиллӗкмӗш сессийӗн решенийӗсемпе хавхаланса, Шупашкарти электроаппаратура заводӗнчи рабочисем, инженерсемпе техниксем хӑйсен производствӑри тата политикӑлла активлӑхне ӳстерсе пыраҫҫӗ. Заводран пынӑ стахановка Спасова юлташ ҫапла каласа пачӗ:

— Эпир, совет ҫыннисем, мирлӗ ӗҫ тӑватпӑр. Пире вӑрҫӑ кирлӗ мар. Эпир Коммунистсен партийӗн политикине чӗререн ырлатпӑр. Орденлӑ завод коллективӗ ячӗпе эпӗ ҫакна калатӑп: эпир хамӑрӑн хастарлӑ ӗҫпе социализмла Тӑван ҫӗршывӑмӑрӑн экономикипе оборона хӑватне ӳстерсе пырӑпӑр.

Пленумра ҫавӑн пекех СССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ Кугушева, Шупашкар районӗнчи Кӳкеҫ больницинчи главнӑй врач Васильев, Чӑваш АССР искусствисен тава тивӗҫлӗ деятелӗ композитор Лебедев, Муркаш МТС-ӗнчи трактор бригадин бригадирӗ Кузнецов, Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ артисчӗ Евсеева юлташсем тухса каларӗҫ. Вӗсем пурте Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗпе Совет Союзӗнчи Мир Комитечӗн решенийӗсене ырларӗҫ, совет ҫыннисем Тӑван ҫӗршыва, Коммунистсен партийӗпе тӑван Правительствӑна чун-чӗререн юратса ӗҫлени ҫинчен каласа пачӗҫ.

Пленум Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗ тата Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗ государствӑсем хушшинчи тавлашусене калаҫусем иртттернипе татса пама тӑрӑшса йышӑннине ырласа резолюци йышӑнчӗ. Пленум ҫакна палӑртрӗ: Чӑваш АССР-ӗнчи мӗнпур рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци, мӗнпур совет ҫыннисем пекех, Пӗтӗм тӗнчери Мир Совечӗпе Мире хӳтӗлес тӗлӗшпе ӗҫлекен Совет Комитечӗ чӗнсе каланине яланах асра тытӗҫ, тӗнчери ыйтусене мирлӗ майпа татса парассишӗн пыракан юхӑма активлӑ хутшӑнӗҫ, ҫак кампание социализмла ӑмӑртӑва вӑйлатса янипе, государство заданийӗсене пурнӑҫлас ӗҫре, Тӑван ҫӗршыв тӗрекне ӳстерес ӗҫре ҫӗнӗ ӳсӗмсем тунипе паллӑ тӑвӗҫ. Чӑваш республикинчи ӗҫсыннисем тӗнчери тавлашуллӑ ыйтусене мирлӗ майпа татса парассишӗн пыракан кампани вӑхӑтӗнче хӑйсен мире юратакан шухӑш-кӑмӑлне тепӗр хут кӑтартса парӗҫ, мир политикине ҫирӗппӗн тытса тата пурнӑҫласа пыракан Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви тавра тачӑрах пӗтӗҫӗҫ.

Венгрире апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсен хакне йӳнетнӗ

БУДАПЕШТ, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Венгри Халӑх Республикин Министрӗсен Совечӗ, Венгрири ӗҫҫыннисен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ апат-ҫимӗҫпе промышленность таварӗсен вакӑн сутмалли хакӗсене йӳнетесси ҫинчен постановлени кӑларнӑ.

Венгрири ӗҫҫыннисен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ халӑх пурнӑҫне лайӑхлатасси ҫинчен йышӑннӑ решенипе тата ҫак решени тӑрӑх Венгри Халӑх Республикин правительстви йышӑннӑ программӑна пурнӑҫласа, Венгри Халӑх Республикин Министрӗсен Совечӗпе Венгрири ӗҫҫыннисен партийӗн Центральнӑй Комитечӗ халӑха кирлӗ таварсен хакне нумай йӳнетме йышӑннӑ. Тавар хакӗсене хальхин пек нумай йӳнетни Венгрире ку таранччен пулман.

Тавар хакӗсене 5—10 процентран пуҫласа 30 процент таран чакарнӑ.

В. И. Ленин Сочиненийӗсен 4-мӗш томне венгер чӗлхипе пичетлесе кӑларнӑ

БУДАПЕШТ, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). «Сикра» издательстви В. И. Ленин Сочиненийӗсен 4-мӗш томне венгер чӗлхипе пичетлесе кӑларнӑ. Ҫак тома кӗнӗ произведенисенчен нумайӑшӗ венгер чӗлхипе пӗррремӗш хут тухать. Кӗнекене 50 пин экземпляр кӑларнӑ.

Совет Союзӗпе Иран хушшинчи суту-илӳ ҫыхӑнӑвӗсем

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Совет Союзӗн Иранри Суту-илӳ представителӗпе Иранӑн экономика министерстви хушшинче кӑҫалхи июль тата август уйӑхӗсенче калаҫусем пынӑ, хыҫҫӑн, сентябрӗн 3-мӗшӗнче ССР Союзӗн Иранри Суту-илӳ представителӗ М. И. Кузнецов тата Иранӑн экономика министрӗ Нуркомахи Совет Союзӗнчен Ирана, Иранран Совет Союзне тепӗр ҫулӑха тавар тӑратассине ӳстерессе ҫинчен ҫырусем улӑштарса илнӗ.

Ҫак килӗшӳ тӑрӑх, ССР Союзӗпе Иран хушшинче пӗр-пӗрне таварсем тӑратасси, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, чылай ӳсет. Пӗр-пӗрне тӑратакан таварсем хушшинчен йӑлана кӗнӗ таварсем пулаҫҫӗ.

Корейӑра тыткӑнри ҫар ҫыннисене репатриаци тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӑн ларӑвӗ

ПЕКИН, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ сентябрӗн 5-мӗшӗнче Кэсонран ҫапла пӗлтернӗ:

Хӑйсене репатриацилеме ыйтакан ҫар ҫыннисене улӑштарса илес ӗҫ ыран вӗҫленет. Ҫакӑн ҫинчен тыткӑнри ҫар ҫыннисене репатриаци тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӑн паянхи ларӑвӗнче икӗ енӗн представителӗсем те пӗлтернӗ.

Корейӑпа Китай енӗн комитетри аслӑ членӗ полковник Ли Бьон Ир тата тепӗр хут ҫакӑн ҫинчен асӑрхаттарнӑ: тыткӑнри ҫар ҫыннисене тӳрех репатриаци туса пӗтеричченех Корейӑпа Китай енӗн хӑйсен тӑван ҫӗршывне таврӑнасшӑн пулнӑ, анчах Америка енӗ вӑйпа тытса чарнӑ ҫар ҫыннисене пурне те репатриаци туса пӗтермелле. Вӑл ҫакна палӑртнӑ: Корейӑпа Китай енӗн аллинчи информаци тӑрӑх, Корейӑпа Китайӑн спискра кӑтартнӑ тыткӑнри ҫар ҫыннисем пурте хӑйсен тӑван ҫӗршывне таврӑнасшӑн. Хӑйсен тӑван ҫӗршывне таврӑнасшӑн пулнӑ Корейӑпа Китай енӗн тыткӑнри ҫар ҫыннисене американецсем енчен нимӗнле сӑлтавпа та тытса чарни пулмалла мар.

Комитетӑн сентябрӗн 3-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗнче Америка енне икӗ список панӑ: пӗри—Корея Халӑх ҫарӗн тыткӑнри 249 ҫыннине кӗртнӗ список, тепри — Китай халӑх добровольцӗсен 152 ҫыннине кӗртнӗ список. Ҫак списоксене кӗртнӗ тыткӑнри ҫар ҫыннисем пурте хӑйсен тӑван ҫӗршывне таврӑнасшӑн, анчах американецсем вӗсене киле таврӑнма чарса тӑраҫҫӗ.

Паянхи ларура Корейӑпа Китай енӗ американецсем тытса чарнӑ Корея халӑх ҫарӗн тыткӑнри 206 боецне кӗртсе ҫырнӑ ҫӗнӗ список тӑратнӑ.

Америкӑн комитетри аслӑ членӗ полковник Фридерсдорф: Америка енӗ сентябрӗн 6-мӗшӗ тӗлне Корейӑпа Китай енӗн хӑйсен тӑван ҫӗршывне таврӑнасшӑн пулнӑ тыткӑнри ҫар ҫыннисене пурне те таврӑрса парать, тенӗ. Анчах та, американецсем хӑйсем каланӑ тӑрӑх, ыран вӗсем пурӗ те Китай халӑх добровольцӗсен тыткӑнри 137 ҫыннине кӑна таврӑрса пама палӑртса хунӑ. Тӗрӗссипе илсен, США ҫар министрӗ Стивенсон каланӑ тӑрӑх, Америка енӗ хӑйсен тӑван ҫӗршывне таврӑнасшӑн пулнӑ тыткӑнри 250 китаеца ҫаплах тытса тӑрать. США государство секретарӗ Даллес тата унӑн тыткӑнри ҫар ҫыннисене репатриаци тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен комитетӗнчи ҫыннисем Корейӑпа Китай енӗн хӑйсен тӑван ҫӗршывне таврӑнасшӑн пулнӑ тыткӑнри ҫар ҫыннисене пурне те таврӑрса пама шантарса каланӑ сӑмаха американецсем пурнӑҫлӗҫ-и? Ҫакна тыткӑнри ҫар ҫыннисене тӳрех репатриаци тумалли юлашки кун кӑтартса парӗ.

Корейӑра тыткӑнри ҫар ҫыннисене репатриаци туни

ПЕКИН, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ сентябрӗн 5-мӗшӗнче Кэсонран ҫапла пӗлтернӗ:

Паян Америка енӗ Корея Халӑх ҫарӗн тыткӑнри 2.398 ҫар ҫыннине таврӑрса панӑ. Анчах американецсем заложник вырӑнне тытса чарнӑ Пак Сан Хена, Ли Ин Чера, Ким Тай Хуна тата тыткӑнри Китай халӑх добровольцӗсене таврӑрса паман.

Паян Кочжедо утравӗ ҫинчи 15-мӗш лагерьти иккӗмӗш сектортан таврӑннӑ тыткӑнри ҫар ҫыннисем, хӑйсене вӗлерессӗн хӑрамасӑр, Америка салтакӗсем августӑн 10-мӗшӗнче наркӑмӑшлӑ газсемпе тата огнеметсемпе усӑ курса асаплантарса вӗлернӗ 9 салтакӑн япалисене илсе килнӗ.

Тыткӑнри ҫар ҫыннисене мӗнле „ирӗке кӑларнӑ“

Тыткӑнран таврӑннӑ Корея салтакӗсем каласа пани

ПХЕНЬЯН, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑри тӗп телеграф агентстви Корейӑпа Китай енӗн тыткӑнри салтакӗсене Ли Сын Ман июнӗн 18-мӗшӗнче мӗнле майпа «ирӗке кӑларни» ҫинчен калакан материалсем пичетлесе кӑларнӑ.

Кӑҫал июнӗн 18-мӗшӗнче, американецсем тӳрех хӗтӗртсе тӑнипе, Ли Сын Ман пирӗн енӗн тыткӑнри 27.000 ҫар ҫыннине законсӑр йӗркепе «ирӗке кӑларнӑ». Маршал Ким Ир Сен тата генерал Пын Дэ-хуэй июнӗн 19-мӗшӗнче ярса панӑ ҫыру ҫине ответлесе, Америка енӗ «ирӗке кӑларнӑ» тыткӑнри ҫар ҫыннисене лагерьсене каялла таврӑрас тӗлӗшпе тӑрӑшма пулчӗ. Анчах американецсем ку тарана ҫитсе те хӑйсен сӑмахне пурнӑҫламарӗҫ. Тата та ытларах. Пирӗн енӗн тыткӑнран таврӑннӑ салтакӗсем каласа панӑ тӑрӑх, американецсем Ли Сын Мана пӗрле калрахна та, тыткӑнри ҫар ҫыннисене ҫавнашкал меслетпе «ирӗке кӑларса», хӑйсем пӗтӗмпе тытса юлма парахман.

Августӑн 27-мӗшӗнче хӑйӗн тӑван ҫӗршывне таврӑннӑ ҫар ҫынни Ю Гиль Сун ҫапла каласа парать: «Ирӗке кӑларас» умӗн Тонри лагерӗнче тыткӑнри ҫар ҫыннисем 300 ҫынна яхӑн пулнӑ. Июнӗн 18-мӗшӗ умӗнхи ҫӗрле лагерьти Ли Сын Ман администрацийӗн представителӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисене ҫапла пӗлтерчӗҫ: «Эсир президент Ли Сын Ман приказӗ тӑрӑх ирӗке тухатӑр. Сирӗн лагерьтен 16 километр инҫете туха каймалла. Туха касассине — ушкӑнпа каймалла. Кам лагерьте юлать тата кам тарма пӑхать, ӑна персе вӗлеретпӗр». Шуҫӑм килнӗ чухне, раксӑтна панӑ сигнал тӑрӑх, Ли Сын Ман салтакӗсем тыткӑнри ҫар ҫыннисене лагерьтен вӑйпа хӑваласа кӑларма тытӑнчӗҫ. Лагерь тавра тӗтӗм мӑкӑрлантарма пуҫларӗҫ. Тарма пӑхакан салтаксене персе вӗлерме тӗтӗм хыҫӗнче Ли Сын Ман полицейскийӗсен пысӑк ушкӑнӗ пытанса тӑнӑ. Тӗтӗм саланса пӗтнӗ хыҫҫӑн, эпир полицейскисем персе пӑрахнӑ нумай салтаксен виллисене куртӑмӑр. Эпир, 34 ҫын, лагере юлтӑмӑр. Лисынмановецсем пире прикладсемпе хӗнеме тата куҫҫуль кӑларакан газсем тултарнӑ бомбӑсем пӑрахма пуҫларӗҫ. Августӑн 7-мӗшӗнче пире Пусан хулинчи Кочжери кварталӗнчи лагере куҫарчӗҫ. Эпир пырса ҫитнӗ тӗле лагерьте пирӗн пек «ирӗке тухма» килӗшмен салтаксем 4.000 ҫын пулнӑ. Августӑн 2-мӗшӗнче пире Паньмыньчжона илсе килчӗҫ.

Августӑн 27-мӗшӗнче тӑван ҫӗршыва таврӑннӑ Ким Чжон Вон ҫапла каласа панӑ: эпӗ Пусанри Кочжери лагерӗнче пулнӑ. Июнӗн 21-мӗшӗнче, урӑхла каласан, ытти лагерьсенче тыткӑнри ҫар ҫыннисене «ирӗке кӑларнӑ» хыҫҫӑн, пирӗн лагере хуралламма лисынмановецсем вырӑнне американецсем килсе ҫитрӗҫ. Июнӗн 28-мӗшӗнче лагерь администрацийӗ юри лагере илсе пынӑ Ли Сын Ман агенчӗсем, пурӗ 200 ҫынна яхӑн, пралук картасене касма тытӑнчӗҫ. Лагере хуралласа тӑракан Америка салтакӗсем вӗсем ҫавӑн пек хӑтланни ҫине куҫа кӑна пӑхса тӑчӗҫ, вӗсене чарас тӗлӗшпе нимӗн те тумарӗҫ. Пралуксене татса пӗтерсен, лисынмановецсем кӑшкӑрашса ушкӑнпа лагерьтен тухса кайма тытӑнчӗҫ. Вӗсем хыҫҫӑн провокаципе ӑнланса илмен тыткӑнри ҫар ҫыннисем те тухса кайрӗҫ.

Венӑра кӗркуннехи ярмарка уҫӑлнӑ

ВЕНА, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Венӑра кӗркуннехи ярмарка уҫӑлнӑ. Ярмаркӑна Австрири нумай фирмӑсем хутшӑннипе пӗрлех, Совет Союзӗ, Чехословаки, Польша, Венгри, Болгари, Демократиллӗ Германи Республики, Хӗвеланӑҫ Германи, Англи, Итали тата ытти ҫӗршывсем те хутшӑнаҫҫӗ.

Ярмаркӑна пыракансем Совет Союзӗн павильонӗпе питӗ интересленеҫҫӗ. Павильонра тимӗр касакан, пир-авӑр тӗртекен станоксем, ялхуҫалӑх машинисем, автомашинӑсем, ҫӗр кӑмрӑк кӑларакан комбайнсем, медицина оборудованийӗ, оптика приборӗсем, куллен кирлӗ таварсем нумай.

Павильон уҫӑличчен чылай малтан павильон умне ҫӗршер австриец пухӑнса тӑнӑ. Совет павильонӗ умӗнче кун каҫа черет пулнӑ. Малтанхи 5 сехет хушшинче Совет Союзӗн павильонне 50 пин ҫын пырса курнӑ. Вӑл шутра: канцлер Рааб, ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Грубер, Австрири Коммунистсен партийӗн председателӗ Коплениг, Австрири Коммунистсен партийӗн генеральнӑй секретарӗ Фюрнберг, дипломатиллӗ корпус членӗсем, хуҫалӑх представителӗсем пулнӑ.

Чехословаки, Польша, Венгри, Болгари павильонӗсем те ҫавӑн пекех пысӑк хисепре. Ку павильонсенче ҫак ҫӗршывсем социализм строительствинче тунӑ ҫитӗнӳҫене кӑтартнӑ.

Физиологсен тӗнчери XIX-мӗш конгресӗ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Сентябрӗн 4-мӗшӗнче физиологсен тӗнчери XIX-мӗш конгресӗ хупӑннӑ. Конгресс делегачӗсем Совет ученӑйӗсен доклачӗсемпе тата совет физиологийӗ тунӑ ҫитӗнӳсемпе питӗ интересленнӗ. К. М. Быков академик «Пуҫ мимин тулаш сийӗн физиологийӗпе чирӗсем ҫинчен калакан ҫӗнӗ данннӑйӗсем» ҫинчен тунӑ доклада тата совет делегацийӗн ытти членӗсен доклачӗсене пысӑк тимлӗхпе итленӗ.

Конгресс Физиологсен пӗтӗм тӗнчери союзне туса хурасси ҫинчен решени йышӑннӑ, ҫавӑн пекех тата Физиологсен пӗтӗм тӗнчери союзӗн Советне суйланӑ, унта, уйрӑммӑн илсен, совет ученӑйӗ К. М. Быков академик кӗнӗ.

Хӗвеланӑҫ Германири суйлав

БЕРЛИН, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Хӗвеланӑҫ Германире бундестаг (парламент) суйлавӗ пулса иртрӗ. Сасӑлама вырӑнти вӑхӑтпа ирхине 8 сехетре тытӑннӑ. Каҫхине 6 сехет тӗлне сасӑласа пӗтернӗ.

Бундестага пӗтӗмпе 484 депутат суйламалла. Хӗвеланӑҫ Германире пурӗ 33 миллион суйлавҫӑ шутланать. Гамбургри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, суйлавҫӑсенчен 80 процентне яхӑн суйлава хутшӑннӑ. АДН агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, суйлав питӗ сехӗрленӳллӗ лару-тӑрура иртнӗ. Хӗвеланӑҫ Германи влаҫӗсем ҫак суйлава иртернӗ май полицейскисене 100 пин ҫын ытла хатӗр тытса тӑнӑ. Нумай суйлав участокӗсем умӗнче полици нарядӗсем тӑнӑ. Рурти хуласенче суйлав участокӗсем хушшинче полици автомобилӗсем ҫӳренӗ. Мюнхенра тата ытти хуласенче те влаҫсем аллинче полицейскисемпе граждански тум тӑхӑннӑ уголовнӑй полици агенчӗсемсӗр пуҫне фашистла элементсем ертсе пыракан «вырӑнти хӳтлӗх ушкӑнӗ» тенӗскерсем пулнӑ.

Фашистла элементсем Германири коммунистсен партийӗн, халӑх партийӗн тата социал-демократсен партийӗн суйлав лозунгӗсене сурса пӗтернӗ пулсан, пур ҫӗрте те христианла-демократсен партийӗн тата правительство коалицине кӗрекен ытти партисен суйлав плакачӗсем ҫакӑнса тӑнӑ.

Бонран пӗлтернӗ тӑрӑх, суйлав результачӗсем сентябрӗн 7-мӗшӗнче ирхине паллӑ пулмалла.

Гватемалӑра ҫӗр реформи иртернӗ хыҫҫӑн

НЬЮ-ЙОРК, сентябрӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). 1953 ҫулхи февраль уйӑхӗнче Гватемала правительстви, ҫӗр реформи иртернӗ май, Америкӑн «Юнайтед фрут компани» ятлӑ компани аллинче тӑракан 233.973 акр ҫӗре конфискацилесси ҫинчен решени йышӑннӑ. Ҫак ҫӗршӗн компенсаци укҫине компани налог тӳленӗ чухне кӑтартакан хака шута илсе тӳлемелле тунӑ пулнӑ.

Августӑн 28-мӗшӗнче США департаменчӗ Гватемалӑн США-ри посолне Гилермо Ториальона памятнӑй записка панӑ. Ҫак записка вӑл Гватемалӑн шалти ӗҫӗсене тӳрех хутшӑнни пулать. США государство департаменчӗ: «Юнайтед фрут компани» ҫӗрне конфискацилени законсӑр ӗҫ пулать, компенсаци укҫи тӗрӗс мар тӳлеҫҫӗ, тесе калама пӑхать.

«Нью-Йорк таймс» хаҫатӑн Гватемалӑри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Гилермо Ториальо корреспондентсене ҫапла каласа панӑ: унӑн ҫӗршывӗ государство департаменчӗ панӑ протеста нацизм чысне мӑшкӑл туни пулать, тесе шутлать. Вӑл юлашкинчен: протеста сирсе ярас пулать, тенӗ.

Корреспондент каланӑ тӑрӑх, Ториальо государство департаменчӗн меморандумне сивленипе пӗрлех, Гватемала халӑхне ҫӗршывӑн никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн тата суверенитетне хӳтӗлессишӗн кӗрешме пӗрлешме чӗннӗ.

Италипе Югослави хушшинчи сыхӑнусем пирки

ПАРИЖ, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентствин корреспонденчӗ Белградран ҫапла пӗлтерет:

Сентябрӗн 5-мӗшӗнче ют ҫӗршыв ӗҫӗсем енӗпе ӗҫлекен государство секретарӗ Попович хӗвеланӑҫри виҫӗ держава посолӗсен канашлӑвне пухнӑ. Ӗҫ мӗнле пулса пынине лайӑх пӗлсе тӑракансен шучӗпе, Итали ҫарӗсем Италипе Югослави чиккинче куҫса ҫӳренӗ пирки Югослави правительстви вӑрҫӑ ӗҫӗсем тӗлӗшпе мерӑсем йышӑнма шутлани ҫинчен Попович ют ҫӗршыв держависен представителӗсене асӑрхаттарнӑ.

ВЕНА, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Танюг агентствин корреспонденчӗ Нова Горицаран ҫапла пӗлтерет:

Югославипа чикӗллӗ районсене ҫаплах Итали ҫарӗсем килсе тӑраҫҫӗ. «Чентауро» текен бронетанковӑй дивизи чикӗ тӑрӑх Добердобаран пуҫласа Горицӑна ҫитиччен, «Фольгоре» текен дивизи Горицӑран пуҫласа Югослави, Австри, Итали чиккисем пӗрлешекен вырӑна ҫитиччен позици йышӑнса тӑраҫҫӗ. «Ариетте» текен моторизованнӑй дивизи чикӗ тӑрӑх Ирӗклӗ Триест Территорийӗнчен пуҫласа Заграда ҫитиччен вырнаҫса тӑрать. Юлашки вӑхӑтра ку дивизисене штурмовиксем парса вӑйлатнӑ, штурмовиксем Удине аэродромне вырнаҫнӑ.

ЛОНДОН, сентябрӗн 5-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ Триестран ҫапла пӗлтернӗ:

Сентябрӗн 6-мӗшӗнче Итали чикки ҫывӑхӗнчи Скроглицара партизан пулнӑ 200.000 ҫын умӗнче Тито тухса калать. Ҫавӑн чухне мӗнле те пулсан хирӗҫӳ пулма пултарнине шута илсе, Англипе Америкӑн Триестри гарнизонӗ тата полици сентябрӗн 5-мӗшӗнчен пуҫласа хатӗр тӑраҫҫӗ.

ЛОНДОН, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Италипе чикӗллӗ районти Югослави ялӗсенчен пӗринче пулнӑ митингра Тито сӑмах тухса каланӑ. Триеста интернационализацилемелле, Триест ҫывӑхӗнчи территорие Югославипе пайлама, тенӗ вӑл. Тито ҫапла каланӑ: Итали Ирӗклӗ Триест Территорийӗн ирӗк хӑш пайне туртса илме хӑтланасан та, Югослави хирӗҫ тӑрать.

ЛОНДОН, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви Римран пӗлтернӗ тӑрӑх, маршал Тито Триест хулине интернационализацилемелле тесе тата Триест ҫывӑхӗнчи территорие Югослави ҫумне пӗрлештермелле тесе панӑ сӗнӗве Италири политикӑлла ушкӑнсем ҫийӗнчех сирсе пӑрахнӑ. «Ку сӗнӗве ҫаплипех ӑнлапас пулсан, ӑна каласусен никӗсӗ вырӑнне те хума ҫук,—тенӗ Римри комментаторсенчен пӗри.—Триест хулинче тата унӑн ҫывӑхӗнчи территорире пурнӑҫчен ытла итальянецсем пурӑнаҫҫӗ».

ВЕНА, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Югославин Танюг агентствин корреспонденчӗ Триестран пӗлтернӗ тӑрӑх, Италин бронетанковӑй чаҫӗсемпе ытти чаҫӗсем Италипе Триест территорийӗн «А» зони хушшинчи чикӗ ҫывӑхӗнчи пӗр вырӑн патне куҫса пыраҫҫӗ.

РИМ, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Социалистсен партийӗн генеральнӑй секретарӗ Пьетро Ненни «Ирӗклӗ Триест Территорийӗнче ӗҫсем начарланнӑ пирки правительство мӗнле политика тытса пыма шутлани» ҫинчен премьер-министр Пелла умне ыйту тӑратнӑ. Ненни ҫак ыйтӑва депутатсен палатинче сӳтсе явма кирлине палӑртнӑ.

„Юманите“ хаҫатӑн уявӗ

ПАРИЖ, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Париж ҫывӑхӗнчи Венсен вӑрманӗнче «Юманите» хаҫатӑн яланхи уявне иртернӗ. Франци ӗҫҫыннисен юратнӑ уявне организациленӗ тата иртернӗ ҫӗре Францири Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе, департаментсенчи федерацийӗсем, «Юманите» хаҫат редакцийӗ, Францине Совет Союзӗ тата халӑх демократи ҫӗршывӗсем хушшинчи туслӑх обществисем, Францири демократиллӗ нумай организацисем хутшӑннӑ.

Венсен вӑрманӗн территорийӗнче киоскӗсем нумай пулнӑ. Вӗсенче марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсене, Францири демократиллӗ писательсемпе ытти ҫӗршывсенчи прогрессивлӑ писательсен кӗнекисене сутнӑ. «Юманите» хаҫатӑн ӑнӑҫлӑ ӗҫне, миршӗн тӑракансен паттӑр ӗҫне, ҫавӑн пекех Совет Союзӗпе халӑх демократи ҫӗршывӗсен ҫитӗнӗвӗсене кӑтартса паракан стендсем тунӑ.

Уявра тӗрлӗрен спорт ӑмӑртӑвӗсем, концертсем иртернӗ, рабочисен художествӑллӑ пултарулӑхне кӑтартнӑ. Уяв мире, демократиллӗ ирӗклӗхсене тата Францин никама пӑхӑнманлӑхне хӳтӗлес лозунгпа иртнӗ.

Ирхине 11 сехет тӗлне «Юманите» хаҫат уявне 700 пин ҫынна яхӑн пухӑннӑ. Кун-каҫа уява ҫынсем пӗр миллион сурӑ чухлӗ хутшӑннӑ.

Францири забастовка

ПАРИЖ, сентябрӗн 6-мӗшӗ. (ТАСС). Гавр хулинче 20 кун хушши ытла ӗнтӗ забастовка пырать. Забастовкӑна 15 пин ҫын: металлистсем, строительсем, пир-авӑр тӗртекенсем, портра ӗҫлекен рабочисем хутшӑннӑ. «Юманите-диманш» хаҫат ҫырнӑ тӑрӑх, хулана, чӑннипе илсен, «республикӑн хӑрушсӑрлӑх отрядӗсем» оккупацилесе тараҫҫӗ. Вӗсем промышленность предприятийӗсене йышӑнса илнӗ, хула урамӗсем тӑрӑх патрульре ҫӳреҫҫӗ.

Полици хаяррӑн хӗсӗт пулсан та, ӗнер Пӗтӗм Францири Ӗҫлев конфедерацийӗн вырӑнти организацийӗ пуҫарнипе хулара забастовка тӑвакан рабочисем тепӗр хут митинг иртернӗ. Трамвай работникӗсем, газ заводӗсемпе электростанцисенче ӗҫлекен рабочисем те ӗҫлеме чарӑннӑ, сутуҫӑсем хӑйсен магазинӗсене хупнӑ. Митингра резолюци йышӑннӑ. Унта ӗҫ укҫи ӳстерме, Наци пухӑвӗн сессине халех пухма, «республикӑн хӑрушсӑрлӑх отрядӗсене» хуларан илсе тухма кирли ҫинчен каланӑ.

Америка империализмӗ Иранра активланма пуҫланӑ

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Правительство комментаторӗ Амиди Нури вырӑнти тата ют ҫӗршывсенчи хаҫатсен представителӗсемпе калаҫнӑ чухне Америка правительстви «васкавлӑ пулӑшу» майӗпе 45 миллион доллар пани ҫинчен пӗлтернӗ.

Генерал Захеди Америкӑран пулӑшу илес тӗлӗшпе активлӑ ӗҫлени, тенӗ Нури, «пӑлхавҫӑсен» ӗҫне сирсе ярас тӗлӗшпе пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать.

ТЕГЕРАН, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентстви ҫапла пӗлтерет: «ҫӗршыври коммунизм влиянийӗ сарӑлса пынине чарса лартма тата Иран Совет Союзӗпе ҫыхӑнса ӗҫлессине сирсе яма» Америка Ирана ҫакӑн пек «пулӑшу» парать.

Америка лагерӗсенче

ПЕКИН, сентябрӗн 4-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ Кэсонран ҫапла пӗлтернӗ:

Корейӑпа Китай Хӗрлӗ Хӗрес Обществин представителӗсем Кочжедо утравӗ ҫинчи тыткӑнри ҫар ҫыннисен лагерӗсенчи условисем чӑтма ҫук начар пулни ҫинчен каласа параҫҫӗ.

Китай Хӗрлӗ Хӗресӗн представителӗ Ван Цзин-чунь нумаях пулмасть Кочжедо утравӗ ҫине кайса килнӗ. Вӑл Америка салтакӗсем августӑн 6-мӗшӗнчен пуҫласа 25-мӗшне ҫитиччен тыткӑнри ҫар ҫыннисем ҫине ултӑ хутчен химилле гранатӑсем пӑрахни ҫинчен каласа парать.

15-мӗш лагерӗн иккӗмӗш секторӗнче августӑн 10-мӗшӗнче Америка салтакӗсем химилле бомбӑсем пӑрахнӑ чухне 500 ҫын сиен курнӑ, виҫҫӗшӗ вилнӗ. 11-мӗш лагерьте Америка салтакӗсем августӑн 25-мӗшӗнче тыткӑнри 300 ытла ҫар ҫыннине сиен кӳнӗ, вӗсенчен пӗри суккӑр пулнӑ. Августӑн 9-мӗшӗнче тыткӑнри ҫар ҫыннисем ҫине тапӑннӑ чухне Америка салтакӗсем Корейӑпа Китай Хӗрлӗ Хӗрес обществин представителӗсене сиен кӳнӗ.

Ван Цзин-чунь пӗлтернӗ тӑрӑх, вӗсем лагерьсенче пулнӑ чухне хӑшпӗр лагерьсем пушӑ пулнӑ. Американецсем хӑйсен ирсӗр ӗҫӗсене пытарса тӑрас шутпа тыткӑнри ҫар ҫыннисене лагерьсенчен малтанах илсе тухса кайнӑ. Анчах та пушӑ лагерьсем те тыткӑнри ҫар ҫыннисем мӗн пек йывӑр условисенче пурӑнни ҫинчен питӗ лайӑх каласа параҫҫӗ. 11-мӗш лагерӗн пӗр секторӗнче Хӗрлӗ Хӗрес представителӗсем августӑн 27-мӗшӗнче пулнӑ. Кунти пӳлӗмсенче чӗрӗ ҫывлӑш тӑрать. Тыткӑнри ҫар ҫыннисем выртса-тӑракан вырӑнсем урайӗнчен пӗр футран ҫӳлӗ мар. Пӳлӗмсенче 120-шер ҫын выртса тӑрса пурӑнни.

Чилире таварсен хакӗ ӳснӗ

МОНТЕВИДЕО, сентябрӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). «Эль сигло» хаҫат, Чилири тӗп статистика управленийӗнчен финанс министерстви илнӗ сведенисем тӑрӑх, ҫапла пӗлтерет: кӑҫалхи июнь-июль уйӑхӗсенче Сант-Яго хулинче (Чили столици) таварсен хакӗ 7 процент ӳснӗ. Апат-ҫимӗҫ хакӗ 10 процент, тумтир хакӗ 5,7 процент ӳснӗ.

Хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, июльпе август уйӑхӗсенче таварсен хакӗ 20 процент ӳснӗ.

Л. Н. Толстой ҫуралнӑранпа 125 ҫул тултарас умӗн

Чӑвашсен колхоз председателӗсем хатӗрлекен виҫӗ ҫулхи шкулӗнче вӗрентекен преподавательсем вырӑссен аслӑ писателӗ Л. Н. Толстой ҫуралнӑранпа 125 ҫул тултарнине палӑртса пуху иртерчӗҫ. Виҫҫӗмӗш курсра вӗренекен А. Трофимов юлташ Л. Н. Толстойӑн пурнӑҫӗпе творчестви ҫинчен доклад туса пачӗ. Доклад хыҫҫӑн «Л. Н. Толстой в Ясной Поляне» ятлӑ кинофильм кӑтартрӗҫ. Ку фильм Л. Н. Толстой Ясная Полянӑра мӗнле пурӑнни ҫинчен, вӑл хӑйӗн вилӗмсӗр произведенийӗсене мӗнле ҫырни ҫинчен каласа парать.

Ҫак пуху тӗлне шкулти библиотека выставка организацилерӗ. Выставкӑра Л. Н. Толстойӑн тӗрлӗ кӗнекисем, аслӑ писателӗн вырӑс литературинчи вырӑнӗ ҫинчен калакан плакатсемпе лозунгсем пур.

Вырӑс классикӗсен сочиненийӗсем чӑвашла тухаҫҫӗ

Октябрьти Социализмла Аслӑ революци пулнӑранпа вырӑссен чаплӑ писателӗсен произведенийӗсене чӑвашла куҫарса сахал мар пичетлесе кӑларнӑ, А. С. Пушкинӑн, М. Ю. Лермонтовӑн, Л. Н. Толстойӑн, Н. А. Некрасовӑн, И. С. Тургеневӑн, А. Н. Островскин, А. П. Чеховӑн, А. М. Горькин тата ыттисен кӗнекисем ҫултан ҫулах тухса пынӑ. Анчах вӗсем пуринчен ытларах уйрӑммӑн тухнӑ, вӗсене пӗрлештерсе кӑларнисемех пулман. Халӗ Чӑвашсен государство издательстви вырӑс классикӗсен чи паллӑ произведенийӗсене пӗрле пухса кӑларма пуҫларӗ.

Ҫак кунсенче А. П. Чеховӑн пысӑк кӗнеки тухрӗ. Унта аслӑ писателӗн тӗрлӗ произведенийӗсем 60 таран кӗнӗ, вӑл шутра 55 калав тата 6 пьеса. Калавсем хушшинче повеҫсем те пур—«6-мӗш номерлӗ палата», «Тип ҫырмара», «Мужиксем» т. ыт. те. Пьесӑсенчен сборнике «Чие сачӗ», «Ваня кукка», водевильсенчен «Упа», «Хӑтара», «Туй» тата «Табак сиенӗ ҫинчен» кӗнӗ.

Кӗнекене кӗртнӗ произведенисене Ивзн Мучи, П. Хузангай, Ф. Уяр, В. Алагер, Л. Агаков, М. Еник, Н. Васянка тата ытти чӑваш писателӗсем куҫарнӑ. Кӗнекене илемлӗ, лайӑх хут ҫине пичетлесе кӑларнӑ. Тиражӗ—5.000 экземпляр.

Халӗ А. М. Горькин суйласа илнӗ произведенийӗсене кӑларма хатӗрлесе ҫитернӗ. Ку кӗнекене «Амӑшӗ» ятлӑ повесть тата 30 калав таран кӗрет. Пьесӑсенчен «Тӗпӗнче», «Егор Булычов тата ыттисем», «Васса Железнова» кӗреҫҫӗ. Ҫунсӑр пуҫне, «Америкӑра» ятлӑ кӗнекерен илнӗ памфлетсем пичетленеҫҫӗ: «Сарӑ шуйттан хули», «МОВ» тата «Кичемлӗх патшалӑхӗ».

Ҫитес ҫулхи планпа вырӑссен XIX-мӗш ӗмӗрти чаплӑ драматургӗн А. Н. Островскин суйласа илнӗ пьесисене пӗр кӗнеке туса кӑларма палӑртнӑ. Унта 10—12 пьеса кӗмелле, вӑл шутра «Тӑвӑл», «Хамӑр ҫынсем—майлашӑпӑр», «Урнӑ укҫа», «Вӑрман», «Усрав хӗр» т. ыт. те.

Пьесӑсене А. Ӑлкан, М. Ухсай, И. Максимов-Кошкинский, Л. Агаков, Н. Терентьев, Н. Айзман тата Тани Юн куҫарнӑ. Кӗнеке вӗҫӗнче «А. Н. Островски тата чӑваш театрӗ» темӑпа ҫырнӑ статья пулать.

ПӖЛТЕРНИ

1953 ҫулхи сентябрӗн 9-мӗшӗнче, каҫхине 7 сехетре, Чӑваш академи театрӗнче хулари агитаторсен пухӑвӗ пулать. Унта «Тӗнчери лару-тӑру тата халӑхсен мире хӳтӗлессишӗн пыракан кӗрешӗвӗ» темӑпа доклад пулать.

Докладчик — КПСС обкомӗн секретарӗ С. М. ИСЛЮКОВ юлташ.

КПСС ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖ.

Редактор заместителӗ М. Н. ЯКИМОВ.

КИНО

«РОДИНА»—сентябрӗн 8-мӗшӗнче 12 тата 14 сехетре пуҫланакан сеансенче «Арена смелых»; 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуҫланакан сеансенче—«Их было пятеро».

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн промышленноҫпа строительствӑра ӗҫлеме рабочисем пухакан пайӗ Свердловск, Кемерово, Молотов, Вологда, Сталинград облаҫӗсенчи тата Чӑваш АССР-ӗнчи предприятисенче, стройкӑсенче тата вӑрманпромхозсенче яланах е сезонта ӗҫлеме рабочисем пухать.

Сезонта ӗҫлеме ӗҫ договорӗ тунӑ рабочие каялла тавӑрмалла мар вӑхӑтлӑх пулӑшу 100—200 тенкӗ, предприятие ҫитме ҫул ҫинче пулнӑ вӑхӑтра талӑкне 10 тенкӗ укҫа параҫҫӗ. Ӗҫлемелли вырӑна ҫитме тата договор срокӗ тухсан каялла килме ҫул укҫи тӳлеҫҫӗ.

Сезонлӑ рабочисене предприятире общежитие вырнаҫтараҫҫӗ, вырӑн сармалли япаласем параҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне, администраци 200—300 тенкӗ аванс пама пултарать (ӑна икӗ уйӑх хушшинче каялла тӳлемелле).

Колхозниксем вӑрман хатӗрленӗ е сулӑ юхтарнӑ ҫӗрте ӗҫлесе сезонти нормӑна тултарнӑ пулсан, вӗсен хуҫалӑхӗсем сӗт тата ашкакай памалли нормӑна 25 процент чакараҫҫӗ.

Яланах ӗҫлеме ӗҫ договорӗ тунӑ ҫынсене каялла тавӑрмалла мар вӑхӑтлӑх пулӑшу 150—300 тенкӗ, предприятие ҫитме ҫул ҫинче пулнӑ вӑхӑтра талӑкне 10—15 тенкӗ параҫҫӗ, ҫул укҫи тӳлеттермеҫҫӗ. Предприятие ҫитсен общежитие е хваттере вырнаҫтараҫҫӗ, вырӑн сармалли япаласем тата хваттерте кирлӗ ытти япаласем те параҫҫӗ.

Сезонта тата яланах ӗҫлеме договор тӑвас ыйтупа райсовет исполкомӗсенчи оргнабор уполномоченнӑйӗсем патне пымалла.

Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн оргнабор пайӗ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—4-17, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—13-37, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусем пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 01458 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Тираж 20.000 экз.